ПЕТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛĔШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул Январь 3 ШăМАТКУН № 2 (8911)
35-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

Совет Союзĕ тăрăх (1 стр.).
Вырăнти Советсен суйлавĕ умĕн (1 стр.).
ПАРТИ ПУРНĂÇĔ: И. Золотников. — Лекцисене ячĕшĕн кăна ирттермелле мар (2 стр.).
АГИТАТОРСЕНЕ ПУЛĂШМА: Г. Царев.—Совет Союзĕнчи суйлав йĕрки—тĕнчери чи демократиллĕ йĕрке (2 стр.).
ЧĂВАШ АССР МИНИСТРĔСЕН СОВЕЧĔПЕ КПСС ОБКОМĔНЧЕ: Выльăх-чĕрлĕх валли çуртсем тăвас тĕлĕшпе районсем 1952 çулхи тăваттăмĕш кварталта социализмла ăмăртса ĕçленин итогĕсем çинчен (3 стр.).
И. Данилов.— Пирĕн ÿсĕм (3 стр.).
И. Еремин.—Планран ирттерсе 4 миллион тенкĕлĕх продукци (3 стр.).
Ф. Семенов.— Малтанхи çитĕнÿсем (3 стр.).
В. И. Ленин Сочиненийĕсен 28-мĕш томне венгерла пичетлесе кăларнă (4 стр.).
Китайри ĕççыннисем 1953 çула ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илнĕ (4 стр.).
Демократиллĕ Германи Республикин президенчĕ Вильгельм Пик çĕнĕ çул ячĕпе каланă сăмах (4 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).
Т. Иванов.—Паянхи Тĕрлемес (4 стр.).

Ĕç тухăçлăхне ÿстерсе пырар

Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе совет халăхĕ коммунизмлă общество тăвать. Коммунизмăн материально-техникăллă никĕсне хывас ĕçре ĕç тухăçлăхне пĕрмаях ÿстерсе пыни тĕп вырăнта тăрать. Кашни обществăллă стройăн кунçулĕ ĕç тухăçлăхĕнчен килет, тесе шутланă В. И. Ленин. «Ĕç тухăçлăхĕ вăл, юлашки шутран, çĕнĕ обществăллă строй çĕнтерĕс ĕçре чи кирли, тĕп вырăнта тăраканни... Коммунизм вăл—ирĕклĕ, ăнланулă, пĕрлешнĕ, лайăх техникăпа ĕçлекен рабочисен капитализм чухнехинчен çÿлте тăракан ĕç тухăçлăхĕ». (В. И. Ленин).

Сталинла пилĕкçуллăхсем вăхăтĕнче социализмлă промышленность пысăк çитĕнÿсем турĕ. Хальхи вăхăтра шутра промышленность кашни тăхăр кун хушшинче Российăра Октябрьти Социализмлă Аслă революци умĕн çулталăк хушшинче туса кăларнă чухлĕ продукци туса кăларать. Пиллĕкмĕш пилĕкçуллăхра продукци туса кăларасси 70 процент ÿсет. Социализмлă экономика хăвăрт аталанса пыни, пуринчен ытла ĕç тухăçлăхĕ ÿссе пынинчен килет. Ĕç тухăçлăхĕн пĕлтерĕшĕ халăх хуçалăхĕнче пысăк пулнине çакăнтан уççăн курма пулать: промышленность продукцийĕн пĕтĕм ÿсĕмĕн тăватă пайĕнчен виçĕ пайне яхăн ĕç тухăçлăхне ÿстернипе илмелле. 1955 çулта промышленносри рабочисен ĕç тухăçлăхĕ вăрçăчченхи шайран икĕ хут ÿстермелле.

Коммунистсен партийĕ социализм строительствин пур тапхăрĕнче те производствăна вăйлатса тата лайăхлатса пымалли паха услови пулса тăракан ĕç тухăçлăхне ÿстерес политика тытса пырать. Сталинла пилĕкçуллăхсем вăхăтĕнче пĕтĕм халăх хуçалăхне çĕнĕ техникăпа хĕçпăшаллантарнă. Фабрикăсемпе заводсем, стройкăсем наукăпа техникăн çитĕнĕвĕсемпе, малта пыракансен опычĕпе анлă усă кураççĕ, технологи процесне пĕрмай çĕнетсе лайăхлатаççĕ, производствăна механизацилеççĕ тата электрификацилеççĕ. Савăнпа пĕрлех ĕççыннисен культурăллă тата техникăллă шайĕ пĕрмаях ÿсет. Предприятисенче социализмлă ăмăрту вăйланса пырать. Совет стройĕ ĕççыннисене хăйсен пултарулăхне ÿстерме, таланчĕсене палăртма паха майсем туса парĕ. Çаксем вĕсем пурте ĕç тухăçлăхне ÿстермелли майсем пулаççĕ.

Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съездĕнче Г. М. Маленков юлташ çапла каларĕ: «Совет çыннисем хăйсен опычĕнчен кашни кунах çакна курса ĕненеççĕ: производствăна лайăх организацилени тĕслĕхĕ, çĕнĕ техникăпа усă курни, ĕçе лайăхлатмалли тĕрлĕ майсемпе изобретенисем ялан ĕçе çăмăллатаççĕ, ĕççыннисен пурнăçне лайăхлатаççĕ. Социализм строительствин пур участокĕсенче те ĕççыннисен творчествăллă пуçарăвĕн тĕслĕхĕсем çав тери нумай, вĕсем социализмлă производствăна пĕрмаях ÿстерсе, лайăхлатса пыма пулăшаççĕ. Пирĕн халăх хăйĕн творчествăллă пуçарулăхĕпе, тавçарулăхĕпе, изобретенисем тума пултарнипе таçанах мала тухнă».

Ĕç тухăçлăхне ÿстерни çĕршыв экономикине вăйлатнине тата совет çыннисен пурнăçпа культура условийĕсене лайăхлатнине пирĕн рабочисем пĕлеççĕ. Социализм вăхăтĕнче ĕç тухăçлăхĕ пысăкки государство интересĕсемпе халăх интересĕсем пĕр пек пулнинчен килет. Савăнпа та ĕнтĕ совет çыннисем сталинла çĕнĕ пилĕк çуллăх плана чун-чĕререн ырласа йышăнчĕç.

Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă генилле произведенийĕ, Сталин юлташ съездра тухса каланă сăмах, Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ йышăннă историллĕ решенийĕсем Совет çыннисен политикăллă активлăхĕпе ĕçри хастарлăхне халиччен пулман хăватпа вăйлатрĕç. Фабрикăсемпе заводсенче, МТС-семпе колхозсенче çĕнĕ пилĕк çуллăх плана срокчен тата ирттерсе тултарассишĕн социализмлă ăмăрту анлă саралчĕ. Стахановецсем, рационализаторсемпе изобретательсем çĕнĕ, тухăçлă ĕç меслечĕсем шухăшласа кăлараççĕ, техникăна малалла аталантараççĕ, шалти резервсене палăртаççĕ. Мускаври «Красный пролетарий» заводри паллă стахановкăсен Нина Юшина тата Анастасия Малютина юлташсен пуçарăвĕпе çĕршывра производство циклне чакарассишĕн ăмăрту саралса пырать.

Пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле пирĕн республикăри ĕççыннисем те коммунизм строительствине активлă хутшăнаççĕ. Малта пыракан предприятисем — Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ завод, Улатăрти паравуссем юсакан завод, Çĕмĕрлери «Большевик» завод, Атăл леш енчи электростанци, Шупашкарти пирĕвăр фабрики — государство заданийĕсене тăтăшах ăнăçлă пурнăçлаççĕ, ĕç тухăçлăхне ÿстереççĕ. Пĕтĕмĕшпе илсен, республикăри промышленность ĕç тухăçлăхне ÿстермелли плана çултан-çул тултарса пырать. 1951 çулта республикăри промышленносра ĕç тухăçлăхĕ, 1940 çулхипе танлаштарсан, 86 процент пысăкрах пулнă.

Анчах чылай предприятисенче, стройкăсенче ĕç тухăçлăхне ÿстермелли майсемпе туллин усă курмаççĕ. Чылай предприятисем ĕç тухăçлăхне ÿстермелли плана тултарса пымаççĕ. Хăшпĕр хуçалăх руководителĕсем вăтам кăтартусемпе лăпланса лараççĕ, юлса пыракан рабочисене малта пыраканнисен шайне çитерес, техникăпа туллин усă курас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ. Канашри вагонсем юсакан заводра 1952 çулхи октябрь уйăхĕнче 43 çын, ноябрь уйăхĕнче вара 95 çын ĕç нормине тултарман. Юлашки вăхăтра Çĕмĕрлери сĕтел-пукан комбиначĕ тухăçлă ĕçлемест. 1952 çулхи ноябрь уйăхĕнче кунта ĕç тухăçлăхĕ 1951 çулхи ноябрь уйăхĕнчинчен чылай пĕчĕкрех пулнă. Уйрăмах стройкăсенче ĕçе япăх йĕркеленине, рабочисен ăсталăхне ÿстерме кирлĕ пек тăрăшманнине палăртас пулать.

Парти, хуçалăх тата профсоюз организацийĕсен ĕç тухăçлăхне ÿстерме чарса тăракан сăлтавсене хăвăртрах пĕтермелле, государство заданийĕсене пур кăтартусем тăрăх та тултармалла тата ирттерсе тултармалла тăвас пулать. Промышленность енĕпе ĕçлекен министерствăсемпе управленисен, профсоюз обкомĕсен техникăпа усă курас, технологи процесне çĕнетсе лайăхлатас тĕлĕшпе малта пыракан предприятисемпе производство новаторĕсен опытне анлăн сармалла. Кашни предприятире рационализаторсемпе изобретательсем йышлăн пулччăр, рабочисемпе инженерсен тата техниксен туслăхĕ ÿссе, вăйланса пытăр.

Социализмран коммунизма куçма кирлĕ ĕç тухăçлăхĕн çÿлĕ вишисене çитме çул уçса паракан вăл — стахановла юхăм, тесе вĕрентет И. В. Сталин юлташ. Савăнпа ĕнтĕ стахановецсене, производство новаторĕсене ĕçри революционерсем теççĕ. Стахановла юхăм совет çыннисене хаклă пахалăх—çĕннишĕн кĕрешес туйăм парать. Социализмлă ăмăртура хăватлă вăй парса тăракан совет патриотизмĕ, Тăван çĕршыва юратни палăрса тăрать. Социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пырасси, ĕçре çуралакан çĕнĕ вăйсемпе мелсене ÿстерсе пырасси — предприятисенчи партипе профсоюз тата хуçалăх организацийĕсен тĕп задачи пулать.

Ĕç тухăçлăхне тăтăшах ÿстерсе пырас тесен, производствăна ертсе пырас ĕçе пĕрмаях лайăхлатмалла. Хуçалăх руководителĕсем, инженерсемпе техниксем производство культурине ÿстерни, штурмовщинăна пĕтерни, малта пыракан производство меслечĕпе — потокпа усă курни, ĕçе комплекслă механизацилени—ĕç тухăçлăхне ÿстерме пулăшакан майсем пулнине яланах асра тытма тивĕçлĕ. Партипе правительство, Сталин юлташ кашни рабочи валли тухăçлă ĕçлеме, ăмăртура йышăннă обязательствăна чыслă пурнăçлама паха майсем туса пама хушаççĕ.

Предприятисенчи парторганизацисен социализмлă ăмăртăва ертсе пырассине вăйлатмалла. Ĕç тухăçлăхне кунтан-кун вăйлатса пырса коммунизм строительствин задачисене чыслă пурнăçлар.

Агитаторсем ĕçре

СОВЕТСКИ. Турай ялĕнчи клуб çине «Агитпункт» тесе çырса çапнă илемлĕ сăмахсем катаранах курăнаççĕ. Агитпункт Киров ячĕпе тăракан колхоз библиотекинче—çутă та ăшă пысăк пÿлĕмре вырнаçнă. Вăл Вырăнти Советсен суйлавĕ пуласси çинчен пĕлтернĕ хыççăн тата та хастарлăрах ĕçлеме тытăннă.

Агитпункта кашни кунах суйлавçăсем [illegible] пыраççĕ. Унăн заведующийĕ, [illegible] парторганизаци секретарĕ Михайлов юлташ суйлав умĕнхи агитациллĕ-массăллă ĕçе лайăх йĕркелеме [illegible].

Колхозри кашни бригада çумне çичĕшер агитатор çирĕплетнĕ. Вĕсем иртнĕ суйлавсенче те паха опыт пухнă, халĕ çав опыта туллин усă курма тăрăшаççĕ.

Чăваш АССР тава тивĕçлĕ учителĕ Герасимов юлташ чи лайăх ĕçлекен агитаторсенчен пĕри шутланать. Вăл ĕççыннисене суйлав пуласси çинчен каласа парать тата совет суйлав системи тĕнчери чи демократиллĕ суйлав системи пулни çинчен каласу ирттерчĕ. Агитатор-учитель тĕнчери лару-тăру çинчен, халăхсем çирĕп миршĕн кĕрешни çинчен ирттернĕ каласусене колхозниксем кăмăлласа итлеççĕ. Герасимов юлташ, хаçатсенчи материалсемпе усă курса, колхозниксене Тăван çĕршыври çĕнĕ хыпарсемпе паллаштарать. Çакă вăл колхозниксене ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тума хавхалантарать.

Агитаторсем суйлавçăсене партин XIX-мĕш съезчĕ йышăннă историллĕ решенисем çинчен ăнлантарса параççĕ, лекцисемпе докладсем ирттереççĕ. Нумаях пулмасть Я. Иванов юлташ И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă генилле произведенийĕ çинчен лекци вуласа пачĕ.

Совет Союзĕ тăрăх

Çулталăкри плана тултарнă

СССР Çĕр кăмрăк промышленность министерствин предприятийĕсем 1952 çулта çĕр кăмрăкĕ — çунтармалли тата кокс тумалли çĕр кăмрăкĕ кăлармалли плана декабрĕн 29-мĕшĕнче тултарнă.

* * *

СССР Нефть промышленность министерствин предприятийĕсенче ĕçлекен работниксем 1952 çулта нефть кăлармалли плана декабрĕн 26-мĕшĕнче тата нефтьрен çутă тĕслĕ шĕвек продуктсемпе сĕрмелли сусем тумалли плана декабрĕн 27-мĕшĕнче тултарнă.

* * *

СССР чугун çул транспорчĕ Çул-йĕр министерствине 1952 çулта грузсем тиеме панă государство планне срокчен тултарнă. Вагонсен çаврăнăшне хăвăртлатмалли, ĕç тухăçлăхне ÿстермелли, топливăна перекетлемелли тата грузсем турттарма тăракан хака йÿнетмелли плана ирттерсе тултарнă.

* * *

СССР Хура металлурги министерствин предприятийĕсенчи металлургсем 1952 çулта государствăна металл хатĕрлесе памалли плана срокчен тултарнă: чугун шăратмалли плана декабрĕн 23-мĕшĕнче, хурçă шăратмалли плана декабрĕн 27-мĕшĕнче, прокат тумалли плана декабрĕн 26-мĕшĕнче тата хурçă трубасем туса кăлармалли плана декабрĕн 25-мĕшĕнче тултарнă.

* * *

Электростанцисен министерствине пăхăнса тăракан электростанцисем 1952 çулта электроэнерги туса кăлармалли государство планне декабрĕн 21-мĕшĕнче тултарнă.

(ТАСС).

Кохтла-Ярве—Таллин газопровода туса пĕтернĕ

ТАЛЛИН, декабрĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Кохтла-Ярве—Таллин газопровода тăвакансем çĕнĕ çула Тăван çĕршыв валли лайăх парне хатĕрленипе кĕтсе илнĕ. Çак газопровода сăнаса пăхас ĕçе туса пĕтернĕ. Вăл Таллин хулине газ парса тăма хатĕр.

Кохтла-Ярве—Таллин газопровода тăвассине партин XIX-мĕш съезчĕ пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе панă директивăсенче палăртса хунă. Çак газопровода малтан йышăннă срокран сур çул маларах туса пĕтернĕ.



Свердловск облаçĕ. «Вахрушевуголь» трестăн иккĕмĕш предприятинче çĕр кăмрăкĕ кăларакансен коллективĕ 1952 çулхи плана срокчен тултарнă. Планран ирттерсе 120 эшелон çĕр кăмрăкĕ кăларнă.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: ЭШ-10/75 экскаватор çĕр кăмрăкĕ кăларнă çĕрте ĕçлет.

А. ГРАХОВ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Мускав хулинчи строительсем 1952 çулхи плана ирттерсе тултарнă

Мускав хулинчи строительсем, партин XIX-мĕш съезчĕ йышăннă историллĕ решенисемпе, съездăн юлашки ларăвĕнче Сталин юлташ каланă сăмахпа хавхаланса, хăйсем илнĕ социализмлă обязательствăсене пурнăçлассишĕн ăмăртса ĕçлесе, 1952 çулхи плана ирттерсе тултарнă.

Иртнĕ çулта пурăнмалли çуртсем çĕнĕрен 755.000 тăваткал метр чухлĕ тунă. (План тăрăх 728.000 тăваткал метр тумалла пулнă). Строительсем Сталин юлташ патне янă çырура пурăнмалли çуртсем 750 пин тăваткал метр чухлĕ тума сăмах панă, — çав обязательствăна ирттерсе пурнăçланă. Кунсăр пуçне, туса пĕтернĕ çÿлĕ çуртсенче пурăнмалли вырăн 27.000 тăваткал метр шутланать. Иртнĕ çулта Мускав хулинчи ĕççыннисене пурăнмалли çуртсем 782.000 тăваткал метр чухлĕ туса панă, ку вăл 1940 çулта тунинчен икĕ хут ытларах пулать.

Çуртсем тумалли плана пурнăçласа, çĕнĕрен 27 шкул валли çуртсем туса лартнă тата виçĕ шкул çурчĕ çине çĕнĕ хутсем хушса тунă, — çак çĕнĕ çуртсенче пурĕ 25.000 ача вĕренет. Иртнĕ çулта шкул çурчĕсем туни, 1951 çулхипе танлаштарсан, 20 процент ытларах тата вăрçă умĕнхи 1940 çулхипе танлаштарсан 2,5 хут ытларах пулнă. 1952 çулта ача сачĕсемпе яслисем валли çуртсем тумалли задание ирттерсе тултарнă. Ача сачĕсемпе яслисем валли çĕнĕрен 80 çурт тунă, унта 7 458 вырăн шутланать. Çĕнĕрен тунă больницăсен корпусĕсенче 1.560 вырăн.

Иртнĕ çулта метрополитенăн çĕнĕ линийĕсене тăвас ĕç ăнăçлă пулса пынă.

Мускав хулине куллен-кун усă курма газ парса тăрас ĕç чылай лайăхланнă. Халĕ ĕнтĕ столицăра пурăнакансенчен 90 проценчĕ хваттерсенче газпа усă кураççĕ. Мускав Совечĕ аллинче тăракан пурăнмалли çуртсенчен 96,5 процентне газ кĕртнĕ. Пурăнмалли çуртсене тата культурăпа йăла учрежденийĕсен çурчĕсене ăшă парса тăмалла тума йышăннă плана ирттерсе тултарнă.

Çулсем тумалли тата халиччен тунă çулсене юсаса лайăхлатмалли плана тултарнă. Асфальт сарса 1 миллион та 120 пин тăваткал метр чухлĕ çул тунă. Çуртсен картишĕсене 270 пин тăваткал метр чухлĕ асфальт сарнă. Хулара йывăççем лартса ÿстермелли плана та ирттерсе тултарнă. Иртнĕ çулта 310.000 йывăç тата 1.736.000 йывăç тĕми лартнă.

Хула хуçалăхĕ столицăри ĕççыннисемшĕн лайăхрах ĕçлекен пулнă. Хулана шыв, газ, электроэнерги парса тăмалли, топливо кÿрсе килмелли плана ирттерсе тултарнă. Хула транспорчĕ те пассажирсем лартса çÿремелли плана ирттерсе тултарнă.

Мускав хулинчи хуçалăхăн çĕнĕ стройкисенче тата предприятийĕсенче ĕçлекен рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем пилĕк çуллăх план заданийĕсене тата Мускав хулине 1951—1960 çулсенче çĕнетсе улăштармалли сталинла тĕп плана пурнăçлама хатĕр тăраççĕ.

(ТАСС).

Вĕсем çĕнĕ çула пуринчен малтан кĕтсе илнĕ

БЕРИНГ УТРАВĔ, декабрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Пирĕн çĕршывра пурăнакансенчен çĕнĕ, 1953 çула чи малтан Командорски утравсем çинче пурăнакансем кĕтсе илнĕ. Вĕсем хаклă тирсем хатĕрлемелли плана срокчен—февралĕн 22-мĕшĕ тĕлне тултарма пулнă.

ВЛАДИВОСТОК, декабрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Мускавра каç пулнă вăхăтра Приморье крайĕнчи культура çурчĕсенче, клубсенче, хваттерсенче çĕнĕ çула кĕтсе илме пухăннă çынсем çĕнĕ çул ячĕпе куркасем çĕкленĕ.

Приморье крайĕнче пурăнакансем иртнĕ çулхи ĕçсем çинчен савăнса аса илеççĕ. Пулă тытакансем пулă тытмалли хуçалăха техника тĕлĕшĕнчен çĕнетнĕ. Вĕсене государство пулă тытма çĕнĕ йышши суднăсем панă. Çавна май Приморье крайĕнче пурăнакан пулăççем иртнĕ çулта, ун умĕнхи çултипе танлаштарсан, 1,5 миллион пăт ытларах пулă тытнă. Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи шахтăсенче ĕçлекенсем иртнĕ декабрь уйăхĕнче планран ирттерсе вуншар эшелон çĕр кăмрăкĕ кăларнă.

Иртнĕ çул хушшинче тайгара тата тинĕс хĕрринче пулăççемпе вăрман касакансем валли лайăх поселоксем туса лартнă.

Çĕнĕ, 1953 çулта Приморье крайĕнчи ĕççыннисем партин XIX-мĕш съезчĕ йышăннă решенисене ăнăçлă пурнăçлассишĕн, сталинла пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх плана срокчен тултарассишĕн кĕрешеççĕ.

Крымри курортсенче

СИМФЕРОПОЛЬ, декабрĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Крымра ăшă çанталăк тăрать. Кăнтăр енчи çыранра садсемпе паркçенче роза, хризантема, жасмин чечеке ларнă. Кунта пурăнакансем кăçал юр курман-ха.

Тинĕс çыранĕнче вырнаçнă 100 санатори тата канмалли çуртсем ĕçлеççĕ. Евпаторире 24 санатори, Феодосире 4 санатори ĕçлет. Санаторисемпе канмалли çуртсене кашни кунах çынсем нумай килсе тăраççĕ.

Канма тата сывалма пынă ĕççыннисем хĕвеллĕ ăшă кунсемпе усă кураççĕ. Ялтăра, Симеизра, Алуштăра тата ытти курортлă вырăнсенче кашни кунах тинĕс хĕрринче халăх нумай пулать.

Иртнĕ çулта Крымра 150 санатори тата канмалли çуртсем ĕçленĕ, вĕсенче 250.000 çын канса тата сывалнă.

Санаторисемпе канмалли çуртсен шучĕ ÿссех пырать. 1953 çулта Крымра çĕнĕрен 15 санатори тăваççĕ.

Вырăнти Советсен суйлавĕ умĕн

Округри комиссисене çирĕплетнĕ

Вырăнти Советсен 1950 çулхи суйлавĕ вăхăтĕнче Шупашкарта 176 суйлав округĕ пулнă. Хулара халăх йышĕ хушăннă май кăçалхи суйлавра округсен шучĕ нумайланнă, пĕтĕмпе 188 округ тунă.

Шупашкар хула Совечĕн исполкомĕ округри суйлав комиссийĕсен составне çирĕплетнĕ.

Суйлавçăсен списокне хатĕрлеççĕ

ЕТĔРНЕ. Палтай ял Советĕнче суйлава тимлĕн хатĕрленеççĕ. Ял Советĕнче ĕçлекенсем суйлавçăсен списокне тăваççĕ.

Агитколлектив суйлавçăсем хушшинче ĕçлеме виçшер агитатор уйăрчĕ. Агитациллĕ-массăллă ĕçе вăтам шкулти учительсем хутшăнаççĕ.

Ялти библиотекăра суйлав литературин витринисене туса хатĕрлерĕç. Витрина çинче СССР, РСФСР тата ЧАССР Конституцийĕсен кĕнекисем, Чăваш АССР-ĕнчи ĕççынни депутачĕсен район, хула, ял, поселок Советĕсене суйламалли Положени тата суйлав çинчен калакан ытти кĕнекесем пур.

Çак кунсенче ялти халăх валли тĕнчери лару-тăру çинчен лекци вуласа пачĕç. Агитаторсем пулас суйлав çинчен колхозниксем хушшинче каласусем ирттереççĕ. Агитаторсем хăйсен каласăвĕсенче партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсем çинчен, суйлав йĕрки çинчен каласа панипе пĕрлех, уйра тăракан задачăсем çинче чарăнса тăраççĕ, колхозниксене государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра пурнăçлама чĕнеççĕ.

А. АЛЕКСЕЕВ.

Завод график тăрăх ĕçлет

Çĕмĕрлери «Большевик» завод 1952 çулхи производство планне срокчен тултарчĕ, Тăван çĕршыва планран ирттерсе икĕ миллион тенкĕлĕхе яхăн продукци пачĕ. Ĕç тухăçлăхне ÿстермелли задание ăнăçлă пурнăçланă. Продукцин хăйне ларакан хакне 5,9 процент вырăнне 6,6 процент йÿнетнĕ.

Удмурт АССР-ĕнчи Можгински завод коллективĕн пуçарăвĕпе пирĕн завод икĕ сехетри график тăрăх ĕçлеме тытăнчĕ. Кашни икĕ сехет иртнĕ хыççăн кăтарту хăми çинче уйрăм цехсемпе бригадăсем мĕнле ĕçленине палăртаççĕ. График тăрăх ĕçлеме тытăннăранпа ĕç тухăçлăхĕ чылай ÿсрĕ.

Сталинла пилĕкçуллăхра атă-пушмак промышленноçĕ хăвăрт аталанать. Çавна май Тăван çĕршыва экстракт нумай кирлĕ. 1953 çулта пирĕн заводăн, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, чылай ытларах продукци туса кăлармалла. Завод коллективĕ пысăклатнă плана пур кăтартусем тăрăх та ăнăçлă тултарма хатĕр.

И. ЕВГЕНЬЕВ,
«Большевик» заводри планпа производство пайĕн начальникĕ.

Агитпунктсем тунă

ЕЛЧĔК. Вырăнти Советсен суйлавне хатĕрленнĕ май, Çĕнĕ Тĕмер ялĕнче агитациллĕ-массăллă ĕç анлăн саралса пырать. Агитаторсен семинарне ирттерсе, агитаторсем умĕнче тăракан задачăсем çинчен сÿтсе явнă.

Агитаторсем хăйсен участокĕсенче (кашни участокра 10—13 кил) суйлав законĕ çинчен, РСФСР тата Чăваш АССР Конституцийĕсем çинчен, тĕнчери лару-тăру çинчен каласусем ирттереççĕ. Суйлав участокĕнчи агитпунктсем валли лайăх çуртсем уйăрнă. Вĕсене плакатсемпе тата лозунгсемпе илемлетнĕ.

Агитпунктсене каçсерен суйлавçăсем нумай пухăнаççĕ.

Сысна фермине ĕçлекен çамрăк суйлавçăсем патĕнче А. Краснов агитатор «Сталинла Конституци—тĕнчери чи демократиллĕ Конституци» темăпа каласу ирттерчĕ.

Çак кунсенче клубра çамрăк суйлавçăсен каçĕ пулчĕ. Çĕнĕ çул ячĕпе вĕренекен ачасемпе комсомолецсем концерт ирттерчĕç. Клубра ушкăнпа пухăнса радио итлеççĕ.

Н. ФЕДОРОВ.

Колхозниксем валли лекцисем

ШАХАСАЙ. Калинин ячĕпе тăракан колхозри агитколлектив колхозниксем хушшинче агитациллĕ-массăллă ĕçе чылай лайăхлатрĕ. Агитаторсем каласусем ирттереççĕ тата докладсем туса параççĕ.

Вунă çынтан лекторсен групни тунă. Унта çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительсем тăраççĕ. Лекторсенчен уйрăмах Ф. Морозова, И. Павлов, Г. Васильев юлташсем лайăх ĕçленине кăтартмалла. Вĕсем юлашки икĕ уйăх хушшинче кăна тăватă лекци, икĕ доклад ирттерчĕç.

А. ЕГОРОВ.

Стахановка—суйлав комисси членĕ

Атăл леш енчи торф предприятийĕнче Раиса Казакова торф кăларакансен бригадирĕ пулса ĕçлет. Унăн бригади кашни уйăхрах заданине 130—140 процент тултарать, социализмлă ăмăртура малта пырать. Предприятире ĕçлекенсен коллективĕ Казакова юлташа Сосновка поселокĕнчи суйлав комиссине кĕртме уйăрчĕ. Шупашкар хула Совечĕн исполкомĕ ăна суйлав комисси членĕ пулма çирĕплетрĕ.

С. ХРИСТОФОРОВ.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн постановленине сÿтсе яваççĕ

КАНАШ. Çак кунсенче ĕççынни депутачĕсен Канаш хула Совечĕн XX-мĕш сессийĕ пулчĕ. Сесси Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн виççĕмĕш сессийĕн итогĕсем çинчен хула Совет исполкомĕн председателĕ С. Синицын юлташ тунă доклада сÿтсе яврĕ.

Сессире тухса калакансем хула Совечĕн ĕçĕнчи çитменлĕхĕсене палăртрĕç, унăн ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе паха сĕнÿсем пачĕç.

Сесси хăй йышăннă решенире хулари хуçалăхпа культура строительствине вăйлатма, яланхи комиссисемпе урам комитечĕсен ĕçĕсене лайăхлатма конкретлă ĕçсем тумаллине палăртрĕ.

ÇĔРПУ. Район Совечĕн сессийĕ Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн виççĕмĕш сессийĕн итогĕсем çинчен сÿтсе яврĕ. Куйытупа райсовет исполкомĕн председателĕ П. Степанов юлташ доклад туса пачĕ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĚ

Лекцисене ячĕшĕн кăна иртермелле мар

(Штатра тăман лектор çырăвĕ)

Парти обкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕ хушнипе эпир Сĕнтĕр районĕнчи хăшпĕр колхозсемпе промысла артелĕсенче пултăмăр. «И. В. Сталин юлташ социализмран коммунизма куçмалли условисемпе çул-йĕрсем çинчен» ятлă тема тăрăх çичĕ çĕрте лекци иртертĕмĕр.

Колхозниксемпе колхозницăсем партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсемпе тата И. В. Сталин юлташăн гениллĕ çĕнĕ произведенийĕпе пысăк кăмăлпа интересленеççĕ. Лекци итленĕ хыççăн ĕçсыннисем ыйтусем питĕ нумай параççĕ. Вĕсем пурин çинчен те пĕлесшĕн: халăх демократи çĕршывĕсенче социализм тăвас ĕç мĕнле пырать, Корейăри вăрçă мĕнпе вĕçленĕ, коммунизмăн аслă стройкисенче халĕ мĕн тăваççĕ, Шупашкар гидроэлектростанци пысăк пулать-и, тĕнчери лару-тăру мĕнле. Çапла вара лекторăн хăйĕн темине тĕплĕн пĕлнисĕр пуçне, хамăр çĕршыври тата ытти çĕршывсенчи пурнăçпа лару-тăрăва та лайăх пĕлес пулать.

Ĕçсыннисене интереслентерекен пур ыйтусене те тарăнăн çутатса пани кирлĕ. Унсăрăн колхозниксем кăмăлсăр пулма пултараççĕ. Вăл кăна мар, массăсен шухăш-кăмăлне шута илмесен лекцисен усси те сахал пулать.

Кунта эпир çак тĕслĕхе кăтартса парасшăн. «Дуб» артеле пырсан, кунта КПСС Сĕнтĕр райкомĕн секретарĕпе Комаров юлташпа тĕл пултăмăр. Вăл «Тĕнчери лару-тăру çинчен» лекци вулать. Ăна итлекенсем — чăвашсем, анчах лектор вырăсла калаçать.

Лекци пĕтсен çакăн пек кĕске калаçу пулчĕ.

— Ыйтусем пур-и?—ыйтать лектор.

— Çук!

— Ăнлантăр-и?

— Ăнлантăмăр пулĕ. — Итлекенсем пĕр-пĕринпе калаçса илчĕç.

— Апла пулсан, сывă пулăр, — терĕ те, лектор юнашар яла тухса кайрĕ.

Комаров юлташ лекцине итленĕ ĕçсыннисемпе пирĕн калаçмалла пулчĕ. «Пирĕн те сирĕн валли лекци вуласа памаллаччĕ, анчах эсир ывăнтăр пулĕ» терĕмĕр.

— Лекци мĕн çинчен пулать? — ыйтаççĕ.

Лекци темине пĕлтерсен, пурте тенĕ пекех çапла каларĕç:

— Итлеме питĕ хавас, анчах эсир те чăвашла каламастăр пулĕ çав.

— Лекци чăвашла пулать, — терĕмĕр.

— Апла пулсан, ирччен ларма та пултаратпăр, — терĕç пурте. — Вырăсла пурсăмăр та питех пĕлейместпĕр, ăнланма йывăртарах.

Пирĕн лекци пĕр сехете пычĕ. «Çынсем ывăннă, ыйтусем пулмаççĕ пулĕ» тесе шухăшларăмăр. Çук, пачах урăхла килсе тухрĕ. Лекцие итленĕ юлташсем ыйту хыççăн ыйту пама пуçларĕç: коммунизмра учет ĕçне мĕнле йĕркелесçĕ?, ун чухне укçа пулать-и?, жуликсене, спекулянтсене мĕнле майпа хăвăртрах тĕп тумалла?, Корейăри вăрçă мĕнпе пĕтет? т. ыт. те.

Ыйтусем тăрăх калаçнă май, артель ĕçĕ çине кĕрсе кайрăмăр. Артельте пысăк квалификациллĕ мастерсем пур, вĕсем тĕлĕнмелле илемлĕ те çирĕп пукансем тума пултараççĕ. Анчах чĕртавар çук, юман вырăнне çăкапа ăвăс çеç параççĕ. Чылай колхозсем çуна тупанĕсĕр аптраççĕ. Пăхасчĕ, çуна тупанĕ тăвакан пирĕн мастерсен ĕçне! Ун пек çынсем пирĕн таврара пур-ши? Анчах халĕ, хăть ĕçлеме пăрах. Çăкаран çуна тупанĕ тăвас çук ĕнтĕ. Мĕн чухлĕ хатĕр продукци усă çĕрте — çумăр-юр айĕнче пăсăлса выртать! Склад тума май килмесен, сарай тăвасчĕ.

Кунти çитменлĕхсем çинчен хамăр союза — «Древпромсоюза» пĕлтеретпĕр. Килсе курасчĕ хăть, çук вĕт — телеграммăсем çеç яраççĕ: мунчала килсе илĕр, çăпта çапăр, тесе çеç çыраççĕ. Унтан çав япаласене илсе килни тăваксăр пуçне урăх нимĕн те памасть. Пĕр лашапа нумай продукци турттараймăн.

Акă, райком секретарĕ килсе кайрĕ. Пирĕн хуçалăхпа паллашма, пирĕн цехсенче, мастерскойсенче пулма унăн вăхăт çитмерĕ. Вăл та пулăшмарĕ пулсан, кам пулăштăр ĕнтĕ пире. Ăна хамăр та пĕлместпĕр. Пирĕн артель кăна мар, «Дружба» артель те колхозсене питĕ кирлĕ продукци туса кăларать. Анчах «Древпромсоюз» руководителĕ А. И. Степанов юлташ эпир каланине хăлхана та чикмест.

Лекци хыççăн çавнашкал ыйтусем тăрăх нумайччен калаçса лартăмăр. Ĕçсыннисем хускатнă ыйтусем çинчен КПСС райкомне, «Древпромсоюз» руководителĕсене пĕлтерме сăмах патăмăр.

Анчах эпир халĕ урăххи çинчен калаçасшăн: парти работникĕсен лекцисене шучĕ пултăр та ячĕ пултăр тесе иртерме юрамасть. Пирĕн шутпа Комаров юлташ пысăк йăнăш тăвать. Лекцисене пурте ун пек иртерсен, пысăк усă пулас çук.

Тепĕр кунне Ленин ячĕпе тăракан колхозра пултăмăр. Эпир иртернĕ лекцие итлеме 100 çын ытла пухăнчĕ. Кунта та нумай ыйтусем тăрăх калаçрăмăр. Колхозниксем правлени председательне тата парторганизаци секретарьне критиклерĕç. Вĕсем пухусенче колхозниксене вăрçаççĕ кăна, ĕç çинчен, паян е ыран хуçалăхра мĕн тумалли çинчен ăнлантарса памаççĕ. Çавна пула колхозниксен пĕрлехи пухăвĕсем начар иртеççĕ, пухăва çÿрекенсен йышĕ те чакать.

Колхозниксем ĕç дисциплинине çирĕплетме тăрăшманшăн, халĕ те авăн çапса пĕтерттерменшĕн, хуçалăхри ытти çитменлĕхсемшĕн правление критиклерĕç.

Тепĕр ялта, «Слава» колхозра, конюх Кузьмин юлташ патĕнче каласса ларнă чухне:

— Итлĕр, итлĕр, — тенĕ сасă янрарĕ. — Паян правлени çуртĕнче колхозниксем валли лекци пулать. Лекци теми «И. В. Сталин юлташ социализмран майĕпен коммунизма куçмалли условисемпе çул-йĕрсем çинчен» ятлă.

Çак пĕлтерĕве радио дикторĕ висĕ хут вуларĕ. Лектор ятне асăнчĕ. Лекци миçе сехетре пуçланассине пĕлтерчĕ. Ун хыççăн вăл:

— Халĕ трахомăна пĕтермелли майсем çинчен калаçу итлĕр. Калаçăва Сĕнтĕр больницинчен килнĕ врач иртерет, — терĕ.

— Куратăр-и, мĕнле пурăнатпăр эпир, — тет Кузьмин юлташ.

Улшăнать, çĕнелет колхозлă ял. Унти çынсем те халĕ ĕлĕкхи мар. Кашни килте радио калаçать. Ял ĕçченĕсем ир те, кăнтăрла та, каçхине те Мускав сассине итлеççĕ, Тăван çĕршыв пурнăçĕ çинчен, тĕнчери лару-тăру çинчен çĕнĕрен те çĕнĕ хыпарсем пĕлеççĕ. Нумай ыйтусем хумхантараççĕ ялти ĕçченсене.

Пирĕн лекцие итлеме кунта та çынсем нумай пухăнчĕç. Кунта та лекцие чăвашла туса пама ыйтаççĕ. Çурçĕрччен калаçса лартăмăр. Ку колхоз та авăн çапса пĕтермен мĕн. Государствăна техникăллă культурăсем парса татман. Вăрман хатĕрлемелли плана тултарас ĕçе васкатмалла. Хуçалăхри çитменлĕхсем колхозниксене пăшăрхантараççĕ.

Юлашкинчен çакна каламалла: колхозсенчи парторганизацисен, колхоз правленийĕсен ял ĕçченĕсем валли политикăллă лекцисем, докладсем тата калаçусем иртерессине организацилес ĕç çине тимлĕрех пăхмалла. Лекци пуласси çинчен ĕçсыннисене пурне те пĕлтермелле. Лекци пулакан çĕрте ларма пукансем е саксем пулмалла, унта çутă та, ăшă та пултăр, май килнĕ таран тумтире хывса ларма та пултарччăр.

И. ЗОЛОТНИКОВ.

Съезд материалĕсене вĕренеççĕ

Районти ĕçсыннисем И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă гениллĕ произведенине, вăл партин XIX-мĕш съездĕнче каланă сăмаха тата съездăн историллĕ решенийĕсене пысăк интереспа вĕренеççĕ. Çак паха документсем пропаганда ĕçĕнче тĕп вырăнта тăраççĕ. КПСС райкомĕн библиотеки штатра тăман докладчиксем валли съезд материалĕсемпе И. В. Сталин юлташăн çĕнĕ произведенийĕ тăрăх семинарсем иртерет. Çав семинарсенче инструктивлă докладсем тума квалификациллĕ пропагандистсене хушнă.

«КПСС XIX-мĕш съезчĕ тата ССР Союзĕнчи коммунизм строительствин задачисем» тема тăрăх райсовет исполкомĕн председателĕ Н. Смыков юлташ доклад туса пачĕ. «И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă произведенийĕ—коммунизмăн программăллă документчĕ» тема тăрăх инструктивлă доклад иртернĕ. «И. В. Сталин юлташ социализмран майĕпен коммунизма куçмалли тĕп условисем çинчен» тема тăрăх докладчиксен семинарне Чăваш АССР Коммунальнăй хуçалăх министрĕ Н. Волков юлташ иртерчĕ. Парти райкомĕн библиотеки штатра тăман докладчиксене литературăпа наглядлăй пособисем тупса парса пулăшать.

КПСС XIX-мĕш съезчĕн историллĕ решенийĕсене ăнлантарса парас ĕçре культурăпа çутĕç учрежденийĕсем паллă вырăн йышăнса тăраççĕ. Çавна шута илсе, районта культурăпа çутĕç работникĕсен икĕ кунлăх семинарне иртертĕмĕр. Вĕсем, политикăллă лекцисемпе докладсем итленипе пĕрлех, съезд материалĕсене пропагандăлас тĕлĕшпе методикăллă кăтартусем илчĕç. Ялти клубсен, вулав çурчĕсен тата библиотекăсен работникĕсем хăйсен ĕçĕнчи паха опытпа паллаштарчĕç.

Съезд хыççăнхи кунсенче районта партиллĕ пропаганда ĕçĕ çĕнĕ пусăма çĕкленчĕ. Колхозсенче, предприятисемпе учрежденисенче КПСС Чăваш обкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕ панă тематика тăрăх лекцисемпе докладсем çĕр ытла иртернĕ. Съезд решенийĕсемпе çулпуç произведенине пропагандăлас ĕçе райсовет исполкомĕн ялхуçалăх пайĕн заведующийĕ Г. Макаров, СССР Хатĕрлев министерствин районти уполномоченнăйĕ Н. Желтухин, унăн заместителĕ Г. Крючков, КПСС райком секретарĕсем М. Евдокимов, И. Иванов тата А. Колпакова юлташсем тата райком пропагандисчĕ Н. Харьков юлташ активлă хутшăнаççĕ.

Съезд материалĕсене вĕренес ĕçе умра тăракан задачăсене пурнăçлас ĕçпе çыхăнтараççĕ. Райкомăн штатра тăман докладчикĕсем, массăсем умне тухиччен, вырăнсенче ĕç мĕнле тăнипе паллашаççĕ, çитменлĕхсене тĕпчесе вĕсене пĕтермелли майсем палăртаççĕ. Çапла тĕплĕн хатĕрленсе иртернĕ докладсем ĕçсыннисен политикăллă тата производствăллă активлăхне хăпартма пулăшаççĕ.

Пропаганда ĕçĕнче тĕп вырăнта тăракан документсене колхозниксемпе колхозницăсене ăнлантарса парас ĕçе ялти интеллигенци те хастарлă хутшăнать. Карач вăтам шкулĕн директорĕ Д. Трофимов юлташ, Н. Пальмов, Н. Абрамов учительсем Калинин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем хушшинче докладсем тăтăш туса параççĕ. Елчĕк вăтам шкулĕнче ĕçлекен Л. Шоркина, Н. Осипов тата Г. Смирнов учительсене Чапаев ячĕпе тăракан колхозри уй-хир бригадисенче калаçусем иртернине час-часах курма пулать. Н. Сорокин, Г. Афанасьев учительсем те (Варасăр шкулĕнчен) съезд материалĕсене пропагандăлассине хăйсен чыслă ĕçĕ вырăнне хураççĕ. Вĕсем калаçусем иртерме хатĕрленнĕ чухне хаçатсемпе журналсенче пичетленнĕ теориллĕ статьясемпе анлăн усă кураççĕ.

И. В. Сталин юлташăн гениллĕ произведенийĕпе съезд решенийĕсене вĕренни районти ĕçсыннисене умра тăракан задачăсене пурнăçлассишĕн тата хастарлăрах кĕрешме, ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тума хавхалантарать.

Н. СМИРНОВ,
КПСС Куславкка райкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕн заведующийĕ.

Агитаторсене пулăшма

Совет Союзĕнчи суйлав йĕрки—тĕнчери чи демократиллĕ йĕрке

1953 çулхи февралĕн 22-мĕшĕнче ĕçсынни депутачĕсен вырăнти Совечĕсене суйлаççĕ. Çак суйлав пирĕн çĕршыври ĕçсыннисен политикăллă пурнăçри тата ĕçри активлăхĕ нихçанхинчен вăйлă ÿснĕ вăхăтра, вĕсене Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсемпе Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă гениллĕ произведенийĕ коммунизм тăвассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме хавхалантарса тăнă вăхăтра пулса иртет.

Вырăнти Советсен суйлавне Сталинла Конституципе тата суйлав Положенинче кăтартса панă йĕрке тăрăх иртереççĕ. Совет çĕршывĕнчи суйлав йĕрки вăл—тĕнчери чи демократиллĕ суйлав йĕрки пулса тăрать.

СССР Конституцийĕн 134-мĕш статьинче çапла каланă: «Ĕçсынни депутачĕсен мĕнпур Совечĕсен депутачĕсене: ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн, Союзлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен, крайри тата облаçри ĕçсынни депутачĕсен Совечĕсен, автономиллĕ республикăсен Верховнăй Совечĕсен, ĕçсынни депутачĕсен автономиллĕ облаçри, округри, районти, хулари тата ялти (станицăри, хуторти, кишлакри, аулти) Совечĕсен депутачĕсене суйлавçăсем пурне те тивĕç, пĕр тан тата тÿрех суйламалли правăпа вăрттăн сасăласа суйлаççĕ».

ССР Союзĕн 18 çул тултарнă пур гражданĕсен те депутатсем суйлама хутшăнмалли право пур. СССР Конституцийĕ тăрăх, Совет Союзĕн 23 çул тултарнă кашни гражданинĕ СССР Верховнăй Совечĕн депутатне суйланма пултарать. РСФСР тата ЧАССР Конституцийĕсем тăрăх, Совет çĕршывĕн 21 çул тултарнă кашни гражданинĕ çав республикăсен Верховнăй Совечĕсене депутата суйланма пултарать. ССР Союзĕн 18 çул тултарнă кашни гражданинĕн вырăнти Советсен депутатне суйланма право пур. Совет Союзĕн гражданинĕ, вăл мĕнле расăпа национальность çынни пулнине, арçынне-хĕрарăмне, мĕнле тĕн тытнине, мĕн чухлĕ вĕреннине, пĕр вырăнта мĕн чухлĕ пурăннипе пурăнманнине, мĕнле социальнăй сийрен тухнине, пурлăхĕ мĕнлине тата ĕлĕк мĕнле ĕçпе пурăннине пăхмасăр, Совет влаçĕн мĕнпур органĕсене суйланă çĕре хутшăнма тата çав органсене суйланма пултарать. Совет Союзĕн гражданинĕ суйлав кунĕнче ăçта пулать, çавăнта суйлава хутшăнать. Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флотĕнчи граждансем те хăйсен çар чаçĕ е карапĕ тăнă çĕрте суйлава хутшăнаççĕ.

Совет çĕршывĕнче ăсран тухнă çынсен тата судпа айăпласа суйлав прависĕр хăварнă çынсен кăна суйлав прави çук.

Кашни гражданинăн пĕр сасă пур, суйлава граждансем пĕр тан тивĕçпе хутшăнаççĕ, тенĕ Советсене суйламалли Положенире. Ĕçсынни депутачĕсен Совечĕсене суйланă чухне кандидатсене суйлав округĕсем тăрăх тăратаççĕ. Кашни округран пĕр депутат суйланать.

Суйлава хатĕрленнĕ май суйлавçăсен списокĕсене тĕплĕ çырса хатĕрлемелле. Кашни суйлавçă пĕр списокра çеç пулмалла. Суйлавçăсен списокне çырса пĕтернĕ вăхăтпа суйлав кунĕ хушшинче суйлавçă урăх вырăна куçсан, ăна Совет исполкомĕ «Сасăлама право паракан удостоверени» парать тата суйлавçăсен списокĕнче «тухса кайнă» тесе паллă тăвать. «Сасăлама право паракан удостоверени» илнĕ суйлавçă çак удостоверенине тата хăй камне пĕлтерекен удостоверенине кăтартсан, ăна тепĕр çĕрте суйлавçăсен списокне кĕртеççĕ.

Советсене суйлама суйлав комиссийĕсем тăваççĕ. Суйлав комиссийĕсене кĕртме рабочисемпе служащисен профессиллĕ организацийĕсем, кооперативлă организацисем, коммунистсен партийĕн организацийĕсем, закон йĕркипе регистрациленĕ культурăпа техника тата наука обществисем, ĕçсыннисен обществисем тата обществăллă организацисем, çавăн пекех предприятисемпе учрежденисенче—рабочисемпе служащисен пухăвĕсем, çар чаçĕсенче—çар çыннисен пухăвĕсем, совхозсенче—совхоз рабочийĕсемпе служащийĕсен пухăвĕсем представительсем уйăраççĕ. Суйлав комиссийĕсене тивĕçлĕ Советсен исполкомĕсем тăваççĕ. «Чăваш АССР ĕçсынни депутачĕсен район, хула, ял тата поселок Совечĕсене суйламалли Положенире» суйлав йĕрки, суйлавçăсен списокĕсем, суйлав округĕсемпе суйлав комиссийĕсем, суйлав участокĕсемпе участокри суйлав комиссийĕсем çинчен тĕплĕн каласа панă.

Депутата суйлама кандидатсем тăратма обществăллă организацисемпе ĕçсынни обществисене — коммунистсен партийĕн организацийĕсене, профессиллĕ союзсене, кооперативлă организацисене, çамрăксен организацийĕсене тата культура обществисене право панă. Çав правăпа усă курса, обществăллă организацисен тата ĕçсынни обществисен республикăри органĕсем, вĕсен районсенчи органĕсем, предприятисемпе учрежденисенче — рабочисемпе служащисен пухăвĕсем, çар чаçĕсенче—çар çыннисен, колхозсемпе ялсенче — хресченсен, совхозсенче — совхоз рабочисемпе служащийĕсен пĕрлехи пухăвĕсем Совета суйлама тивĕçлĕ çынсене кандидата тăратаççĕ. Кунтан çакă курăнать: пирĕн çĕршывра депутата суйлама кандидатсем тăратма ĕçсыннисен йышлă массисем хутшăнаççĕ. Совет органĕсенче те халăхăн йышлă массисем ĕçлеççĕ. Пирĕн Чăваш республикинче 1950 çулхи суйлавра район Совечĕсене 890 депутат, хула Совечĕсене 486, ял Совечĕсене 8.234, поселок Совечĕсене 252 депутат суйланă.

Çапла вара, пирĕн суйлав йĕрки вăл чи демократиллĕ йĕрке кăна мар, вăл ĕçсыннисене государство управленине хутшăнма тулли право парать.

Советсем пĕртен-пĕр массăллă организацисем пулса тăраççĕ, вĕсем массăсен тÿрремĕнех хăйсем тунă организацийĕсем, урăхла каласан, чи демократиллĕ тата, çапла вара, массăсен чи авторитетлă организацийĕсем пулса тăраççĕ, государствăна тытса тăрас ĕçе хутшăнма пысăк майсем туса параççĕ, массăсен революциллĕ хастарлăхне, пуçарулăхне питех те анлă сарса яраççĕ.

Граждансем государство управленине тÿрремĕнех хутшăнмалли майсенчен пĕри вăл—суйлавçăсем Советсене суйламалли правăпа усă курни пулать. Çавăнпа та кашни суйлавçăн суйлава хутшăннипе пĕрлех, вăл хăй суйланă депутатшăн ответлă пулнине туйса тăрас пулать. Совета суйланнă депутат «халăх тарçи» ятне, çак хисеплĕ ята тÿрре кăлартăр, хăйне шанса панă ĕçе чыслăн пурнăçласа пытăр.

Пирĕн çĕршывра власть органĕсене чăн-чăн ирĕклĕ, демократиллĕ йĕркепе суйлаççĕ. Ĕçсынни депутачĕсен Совечĕсен суйлавĕ—пирĕн пĕтĕм халăхăн пысăк уявĕ. Суйлавра совет халăхĕ хăйĕн мораллĕ-политикăллă пĕрлĕхне, Коммунистсен партийĕпе Совет правительствин, аслă Сталин тавра тачă пĕтĕçсе тăнине кăтартса парать.

Сталинла Конституци государство влаçĕн органĕсене тÿрех суйламалли йĕрке тунă. Пирĕн суйлавçăсем ял, хула, район, область Совечĕсене кăна мар, союзлă республикăсемпе автономиллĕ республикăсен Верховнăй Совечĕсене те, СССР Верховнăй Совечне те тÿрех вырăнсенче депутатсем суйласа яраççĕ.

Ĕлĕк, патша Российĕнче, Государственнăй Думăна суйлас умĕн чи малтан «выборщиксем» суйланă. «Выборщиксен» тăватă пайĕнчен висĕ пайĕ помещиксемпе буржуйсем, пĕр чĕрĕкĕ хресченсем (22,4 проценчĕ) тата рабочисем (2,4 проценчĕ) пулнă. Мĕнпур «выборщиксем» пĕрле пухăнса Думăна депутатсем суйланă. Хĕрарăмсен суйлав прави пачах пулман. Вырăс чĕлхине пĕлмен çынсем Думăна суйланма пултарайман. Национальноçсен прависене тĕрлĕ сăлтавсемпе хĕснĕ.

Кирек хăш буржуалла çĕршывра та власть органĕсене суйланă чухне капиталистсем ĕçсыннисене хытă хĕсеççĕ. Çав çĕршывсенче ĕçсыннисен суйлав прависене хытă пÿлсе пĕчĕклетеççĕ. Нумай государствăсенче хĕрарăмсен суйлав прави çук. Колонисенчи тĕп халăхсене суйлав прави паман. США-ра суйлав правине тĕрлĕ пÿлÿсем кĕртнĕ пирки 1952 çулхи ноябрĕн 4-мĕшĕнче пулнă суйлавра 25 миллион çынна яхăн суйлавçă хăйсен прависемпе усă курайман. Унти демократсен тата республиканецсен партийĕсем суйлавçăсене суя сăмахсем парса улталаса, хăратса тата хĕсĕрлесе ытларах сасă пухма тăрăшаççĕ. Унти буржуалла хаçатсем, радиокомментаторсем суйлавра тăратнă прогрессивнăй партин кандидачĕсем çинчен тем те пĕр элеклеççĕ. Суйлавра çиеле тухассишĕн тăрăшса, республиканецсен партийĕпе демократсен партийĕ темиçе çĕршер миллион доллар расходлаççĕ.

США-ра ячĕшĕн пурне те суйлав прави панă пек тунă. Анчах суйлав правипе усă курас йĕркене тĕрлĕ пÿлÿсем кĕртнĕ. Суйлав правине илме гражданинăн паллă хисеп чухлĕ пурлăх пулмалла е ятарласа пухакан налог тÿлемелле, шкулта пĕр-пĕр аслă класран вĕренсе тухмалла е акăлчан чĕлхине пĕлмелле, унăн ялан пурăнмалли хваттер пулмалла е пĕр вырăнта чылай вăхăт хушши пурăнмалла. Çав пÿлÿсене пула ĕçсыннисем суйлав правипе усă курма пултараймаççĕ. США-ра васкасах хĕçпăшал хатĕрлес политикăна тытнă пирки, унта ĕçсĕр юлнă çынсен йышĕ ÿссе пырать. Ĕçсĕр тăрса юлнисен пĕр вырăнта пурăнма май килмест, ĕç шыраса куçса çÿреме тивет. Апла пулсан, вĕсем суйлав правипе усă кураймани паллах ĕнтĕ. США-ра ячĕшĕн негрсене те суйлав прави панă пек тунă. Чăннипе вара негр суйлав участокне пырса прогрессивнăй партин кандидачĕшĕн сасăлас пулсан, çав негра «Линч сучĕпе» — сутсăр-мĕнсĕр асăплантарса вĕлерес хăрушлăх хăратать. США-ри кăнтăрти штатсенче суйлав прави илме «ырă çын» шутланмалла, Хĕвеланăçĕнчи Виргини штатĕнче — «совеçе хисеплесе пурăнмалла», Вермонт штатĕнче—«лăпкă тата харкашман çын» пулмалла.

Капитализмлă ытти çĕршывсенче те ĕçсыннисене суйлав правипе усă курма памаççĕ, вĕсен прависене тĕрлĕ майпа хĕсеççĕ.

Буржуалла çĕршывсенчи суйлав йĕрки çинчен XIX-мĕш съездра Сталин юлташ çапла каларĕ: «Ĕлĕк буржуази либералла хăтланкаланă, буржуалла-демократиллĕ ирĕклĕхсемшĕн тăнă, çапла майпа халăх хушшинче хăйĕн ятне сарнă. Халĕ вара либерализмран йĕрĕ те юлмарĕ. «Этем ирĕклĕхĕ» тени текех çук ĕнтĕ,—халĕ капитал тытакансен кăна этем прави пур тесе шутлаççĕ, ытти мĕнпур граждансене вара эксплуатацилеме çеç юрăхлă этемле чĕрĕ материал вырăнне хураççĕ. Çынсемпе нацисен пĕр тан правалăх принципне таптаса тăкнă, ăна граждансен эксплуатацилекен сахалрахăшĕ тулли правалла пулмалла тата граждансен эксплуатацилекен ытларахăшĕ правасăр пулмалла текен принципа улăштарнă».

Буржуалла çĕршывсенче эксплуататорсемшĕн, капиталистсемшĕн, буржуйсемшĕн, пуянсемшĕн кăна демократи пур. Пирĕн çĕршывра пачах урăхла. Совет Союзĕнчи демократи вăл — ĕçсыннисем валли тунă демократи, урăхла каласан, пуриншĕн те тунă демократи. Çав демократиллĕ йĕркепе ССР Союзĕн гражданĕсене ĕçлев прави, канăç прави, ватăлсан е чирлесен, ĕçлеймен пулсан материальнăй пулăшу илмелли право, вĕренÿ прави, хĕрарăмсене государство пурнăçĕнче обществăллă тата политикăллă пурнăçра арçынсемпе пĕр тан пулмалли правăсем, национальноçсемпе расăсене пурне пĕр тан правăсем панă. Совет гражданĕсене сăмах ирĕклĕхĕ, пичет ирĕклĕхĕ, пухусемпе митингсем тумалли ирĕклĕх, урамра шествисемпе демонстрацисем тумалли ирĕклĕх, обществăллă организацисене пĕрлешме право, гражданина никам тĕкĕнмелле мар право панă. Çак правăсемпе ирĕклĕхсем туллин пурнăçа кĕрсе пынине пурте пĕлетпĕр ĕнтĕ.

СССР Конституцийĕ тăрăх, ют çĕршыв гражданĕсене, вĕсене ĕçсыннисен интересĕсемшĕн тăнăшăн е ăслăлăх тĕлĕшпе ĕçленĕшĕн, е пусмăрти нацисене ирĕке кăларассишĕн кĕрешнĕшĕн хĕсĕрлессĕ пулсан, ССР Союзĕ хÿтлĕх прави парать.

Çавăнпа пĕрлех Сталинла Конституци çине совет гражданĕсен обязанноçĕсем çинчен те çырса хунă. Совет гражданинĕ СССР Конституцине пăхăнса тăма, законсене пурнăçа кĕртсе пыма, ĕçлев дисциплинине çирĕп тытма, обществăшăн тивĕçлипе тÿрĕ кăмăлпа туса пыма, социализмлă пĕрлешÿллĕ пурнăç йĕркисене хисеплеме, обществăллă, социализмлă хапăрлăха упраса, çирĕплетсе пыма тивĕç. ССР Союзĕн Хĕçпăшаллă Вăйĕсен ретĕнчи çар службинче пуласси, Тăван çĕршыва сыхласси—совет гражданинĕн хисеплĕ тивĕçĕ.

Çак обязанноçсене пурнăçласа, совет çыннисем пирĕн çĕршывра коммунизм тăвассишĕн, Тăван çĕршыв хăватне тĕреклетессишĕн, пĕтĕм тĕнчипе мир тăвассишĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешеççĕ. Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съездĕнче партин Центральнăй Комитечĕн ĕçĕсем çинчен тунă доклада Г. М. Маленков юлташ çапла каларĕ: «Пирĕн хăватлă Тăван çĕршыв хăйĕн вăйĕсем чечеклесе ÿснĕ тапхăрта пурăнать, вăл çĕнĕ çитĕнÿсем патнелле пырать. Коммунизмлă обществăна пĕтĕмпех туса çитерме мĕн кирли пирĕн пурте пур. Совет çĕршывĕн çутçанталăкри пуянлăхĕсем иксĕлми нумай. Пирĕн государство çак пысăк пуянлăхсемпе ĕçсыннисен пурнăçне лайăхлатассишĕн усă курма пултарнине кăтартса пачĕ. Совет халăхĕ çĕнĕ общество тума пĕлнине кăтартса пачĕ, вăл малалла шанчăклă пăхать».

Совет халăхĕн кĕрешĕвне Коммунистсен партийĕ ертсе пырать. Парти вăл—ĕçсыннисен кĕрешĕвĕнче малта пыракан отряд. Парти ленинла-сталинла политикăна çирĕп тытса, пурнăçласа пырать. Парти ертсе пынипе совет халăхĕ çитĕнÿ хыççăн çитĕнÿ, çĕнтерÿ хыççăн çĕнтерÿ тăвать.

Пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле Чăваш республикинчи ĕçсыннисем те хуçалăхпа культура строительствинчи задачăсене ăнăçлă пурнăçласа пыраççĕ. Сталинла пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх плана тултарассишĕн тата иртерсе тултарассишĕн ĕçсыннисен социализмлă ăмăртăвĕ вăйланса пырать. 1952 çулхи виççĕмĕш кварталти социализмлă ăмăртусен результачĕ тăрăх, Шупашкарти Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ завод, пир-авăр комбиначĕ, Сĕмĕрлери «Большевик» завод иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене йышăнчĕç. Колхозлă хресченсем тырпул тухăçлăхне ÿстерсе, выльăх-чĕрлĕх шутне нумайлатса тата унăн тухăçлăхне ÿстерсе пыраççĕ. Республикăри колхозсем государствăна ялхуçалăх продукчĕсем тăратмалли плансене срокчен тултарчĕç. Промышленноçра та, ялхуçалăхĕнче те, культура фронтĕнче те эпир чылай пысăк ÿсĕмсем турăмăр пулсан, пирĕн çав çитĕнÿсемпе лăпланса ларма юрамасть. Ĕçсыннисен творчествăллă пуçарулăхĕпе пултарулăхне аталантарса пымалла, социализмлă ăмăртăва анлăн сармалла, малта пыракансемпе новаторсен опычĕ тăрăх ĕçлеме вĕренсе çитмелле, пирĕн пурнăçра çĕнни киввине çĕнтерсе пытăр.

Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕн историллĕ решенийĕсем, Сталин юлташăн съездра каланă сăмахĕ тата унăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă гениллĕ произведенийĕ совет халăхĕн коммунизм патне пымалли çулне маяк пек çутатса тăраççĕ. Çав çулпа кайса, эпир коммунизм строительствин сталинла программине ăнăçлăн пурнăçласа пырăпăр.

Вырăнти Советсен суйлавĕ политикăллă пысăк çĕкленÿпе иртĕ. Суйлавра пирĕн халăх хăйĕн мораллĕ-политикăллă пĕрлĕхне, Коммунистсен партийĕпе Совет правительствине вĕçĕмсĕр шанса тăнине çĕнĕрен кăтартса парĕ.

Г. ЦАРЕВ,
КПСС Чăваш обкомĕн лекторĕ.

Парти райкомĕсен пленумĕсенчен

КПСС Октябрьски райкомĕн пленумĕ шкулсенче çамрăк ăрăва вĕрентсе воспитани парас ĕç мĕнле пыни çинчен сÿтсе явнĕ.

Вĕрентÿпе воспитани ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем сахал мар. Шкулсенче вĕренÿре ĕлкĕрсе пыраймам, пĕр класрах икĕ е висĕ çул ларакан ачасен хисепĕ пысăк. Чылай учительсем хăйсен пĕлĕвне ÿстерессишĕн тăрăшмаççĕ, уроксенче наглядлăй пособисемпе сахал усă кураççĕ, малтан вĕреннине аса илтерес ĕçе çителĕклĕ таран туса пымаççĕ. Уйрăммăнах вырăс чĕлхи вĕрентес тĕлĕшпе япăх ĕçлеççĕ.

Вĕренÿ çулĕн пĕрремĕш чĕрĕкĕнче вĕренÿре ĕлкĕрсе пыраймам ачасен хисепĕ 45 процента яхăн пулнă. Ĕлкĕрсе пыраймам ачасен хисепĕ уйрăмах Хуракассинчи, Октябрьскинчи вăтам шкулсенче, Туçари, Сичĕпÿртри, Энтри Пасарĕнчи, Кутемерти, Кĕчкейри çичĕ çул вĕренмелли т. ыт. шкулсенче те пысăк. Кунти учительсем, хăйсем кирлĕ пек ĕçлейменнине пула, вĕренекенсене кирлĕ пĕлÿсем параймаççĕ.

Районти çутĕç пайĕ вĕрентÿпе воспитани ĕçне лайăхлатас енĕпе çителĕксĕр ĕçлет. Инспекторсем учительсен ĕçне тĕрĕслес тата вĕсене методикăллă пулăшу парас тĕлĕшпе сахал ĕçлеççĕ, шкулсенче сайра хутра кăна пулаççĕ.

Районти хăшпĕр ял Совечĕсем халăха вĕрентес ĕçсем валли бюджетпа пăхса хăварнă укçа-тенкĕне расходламаççĕ.

Ял Совечĕсемпе вырăнти парти организацисем шкул ĕçĕпе сахал интересленеççĕ. Шкулсенчи комсомол организацийĕсем ачасене çирĕп пĕлÿ парас ĕçре учительсене çителĕксĕр пулăшаççĕ. Çитменнине уйрăм комсомолецсем хăйсем вĕренÿре юлса пыраççĕ.

Хуракассинчи вăтам шкулта 120 комсомолец шутланать. Вĕсенчен 44-шĕ вĕренÿре юлса пыраççĕ.

КПСС райкомĕпе ВЛКСМ райкомĕ тата ĕçсынни депутачĕсен район Совечĕ шкулсене ертсе пырас ĕçе кирлĕ пек туса пымаççĕ, вĕрентÿпе воспитани ĕçне куллен тĕрĕслемеççĕ.

КПСС райкомĕн пленумĕ вĕрентÿпе воспитани ĕçне лайăхлатма конкретлă решени йышăнчĕ.

В. ТРОФИМОВ.

* * *

ЧУРАЧАК. КПСС райкомĕн пленумĕ колхозсенчи выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарас ĕçе лайăхлатасси çинчен сÿтсе явнĕ.

Пренире тухса каланă юлташсем парти райкомĕпе райсовет исполкомне тата пуçламăш парторганизацисене обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе çителĕксĕр ертсе пынăшăн хытă критиклерĕç.

— Ялхуçалăх пайĕн специалисчĕсем, — тет А. Кондратьев юлташ.—выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçпе кирлĕ пек интересленмеççĕ-ха. Нумаях пулмасть Калинин ячĕпе тăракан колхоза Дмитриева зоотехник пычĕ. Вăл счетоводран хăйне кирлĕ сведенисем илчĕ те, нимĕнле кăтартусем памасăрах тухса кайрĕ. Тепĕр кунне, каллех ветеринари врачĕ Лекарева юлташ пычĕ. Вăл та акт çырчĕ те, «аçĕ васкатăп», тесе пĕр-ик сехетренех тухса кайрĕ.

Тухса калакансем фермăсенче ĕçлекенсем хушшинчи политикăллă-массăллă ĕçе çителĕксĕр йĕркеленине палăртрĕç.

Сÿтсе явнă ыйту тăрăх пленум решени йышăнчĕ.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС обкомĕнче

Выльăх-чĕрлĕх валли çуртсем тăвас тĕлĕшпе районсем 1952 çулхи тăваттăмĕш кварталта социализмла ăмăртса ĕçленин итогĕсем çинчен

Чăваш АССР-ĕнчи районсем выльăх-чĕрлĕх валли çуртсем тумалли 1952 çулхи IV-мĕш кварталти плана ирттерсе тултарассишĕн социализмла ăмăртса ĕçленин итогĕсене пăхса тухса, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Чăваш обкомĕн бюровĕ çапла йышăннă:

Социализмлă ăмăртура Чурачăк районĕ мала тухнă. Район выльăх-чĕрлĕх тата кайăк-кĕшĕк валли çурт-йĕр тумалли çулталăкри плана тултарас тĕлĕшпе чи пысăкрах çитĕнÿ тунă. Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн тата КПСС Чăваш обкомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне социализмлă ăмăртура мала тухнă Чурачăк районĕнчех хăвармалла тăвас.

Выльăх-чĕрлĕх валли çурт-йĕр тумалли çулталăкри плана тултарассишĕн 1952 çулхи IV-мĕш кварталта Шупашкар тата Буславкка районĕсем лайăх ĕçленине палăртас. Çак районсем выльăх-чĕрлĕх валли çурт-йĕр тумалли плана тăваттăмĕш кварталта иртерсе тултарнă, çулталăкри плана Шупашкар районĕ 115 процент, Буславкка районĕ 122 процент тултарнă.

Выльăх-чĕрлĕх валли çурт-йĕр тăвас ĕçре малта пыракансене премилеме Шупашкарпа Буславкка районĕсене кашнине 2.500-шер тенкĕ премй парас.

Министрсен Совечĕпе КПСС обкомĕ Пăрачкав, Сĕнтĕрвăрри, Кувакино, Первомайски, Чкаловски, Хĕрлĕ Чутай районĕсем выльăх-чĕрлĕх валли çурт-йĕр тăвас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленине палă тунă. Çак районсем выльăх-чĕрлĕх валли çурт-йĕр тумалли тăваттăмĕш кварталти заданине пурнăçламан тата çулталăкри плана та тултарман.

Малтанхи çитĕнÿсем

Обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе лайăхлатма, продуктивлă выльăхсенчен сĕт, çăм, аш-какай ытларах илме иртнĕ çул эпир пысăк ĕçсем турăмăр. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли тата унтан продукци илмелли плана колхоз хăйĕн фермисенче пăхса ÿстернĕ выльăхсемпех ăнăçлă тултарчĕ. Государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем парса татнă.

Сурт-йĕрсем сахал пулнипе тата тăрантарса усрама апат сахалтарах хатĕрленипе, пирĕн колхоз 1951 çулта выльăх-чĕрлĕхрен пысăк тупăш илеймерĕ. Çав çитменлĕхе пĕтерес тесе, иртнĕ çул колхозра çу каçипех строительство ĕçĕсене авăн туса пытăмăр. 200 сурăх, 47 пăру усрамалăх типовой витесем лартрăмăр, лаша, сысна, ĕне витисене (пурĕ 13 витене) тĕпрен юсаса ăшăтрăмăр. Выльăхсене хĕллехи вăхăтра кăларса çÿретме витесем тавра карта тытса çавăрнă, хÿтĕ вырăнсем тунă. Выльăх апатне тĕрлĕрен майпа хатĕрлесе пама 4 кухня тунă, ĕне вити çумĕнче çăл чавса пура янă, ытти фермăсенче 4 çăла тасатса юсанă.

Выльăх апачĕ акса тăвас, улăхсенче, уй-хирте куракăсен тухăçлăхне ÿстерес тата вĕсене тирпейлĕн пухса кĕртес ĕçсене колхозниксем пысăк ответлăхпа туса пычĕç. Выльăхсем валли 250 тонна силос хывнă, 691 центнер кăшман, 2 пин центнер çĕрулми уйăрса панă, çуртри улăмĕ 8.955 центнер, ыраш улăмĕ 4.958 центнер, утă 835 центнер хатĕрленĕ.

Выльăхсен йышĕпе тухăçлăхне ÿстерсе пырас тĕлĕшпе фермăсенче ĕçлекен кадрсене тĕрĕс суйласа ĕçе лартни те, вĕсен ĕçне тĕрĕс йĕркелесе пыни те пысăк вырăн йышăнасçĕ. Эпир пур фермăсене те выльăхсене юратса пăхакан пултаруллă колхозниксене уйăрса лартнă. Вĕсем выльăх-чĕрлĕхе пăхса усрас ĕçе вĕренсе пыраççĕ. Колхоз правленийĕ ферма работникĕсем валли хаçатсемпе журналсем çырăнса илет. Комсомол организацийĕн секретарĕ Е. Ильин юлташ, библиотекарь пулса ĕçленĕ май, фермăсенче ĕçлекен колхозниксене кĕнекесем пырса парать, ветеринари санитарĕ М. Александров юлташ выльăхсене таса усрасси, тĕрĕс тăрантарасси çинчен калаçусем ирттерет, зоотехника правилисене вĕрентет.

Колхозри парторганизаци фермăсенче ĕçлекен коммунистсен ĕçне тĕрĕслесе тăрать, выльăх-чĕрлĕх пăхас ĕçри йĕркелĕхе сăнаса тăрса, çитменлĕхсене хăвăрт пĕтерме пулăшать. Фермăсенче ĕçлекен колхозниксем хушшинче социализмлă ăмăрту организациленĕ.

Хальхи вăхăтра пирĕн фермăсенче выльăхсене нормăпа тăрантараççĕ. Кашни выльăха унăн ăратлăхне, тухăçлăхне, пĕтĕ пулнине тата вăл миçе çула çитнине шута илсе тĕрлĕрен апатсене нормăпа пани пит вырăнлă. Çапла тăрантарсан выльăх-чĕрлĕх лайăх ÿсет, çав вăхăтрах апатпа тĕрĕс усă курма май парать.

Ф. СЕМЕНОВ,
Сталин ячĕпе тăракан колхозри партбюро секретарĕ.
Чурачăк районĕ.

Договора пурнăçламалла

ЕТĔРНЕ. Районти малта цыракан колхозсем кăçалхи ялхуçалăх çулне ăнăçлă вĕçлесе çитес çулхи çуракине хатĕрленме тытăнчĕç. Буденный ячĕпе, Маленков ячĕпе тăракан, «Родина», «Большевик» колхозсенче вăрлăхсем сортлас, хире тислĕк кăларас, ялхуçалăх машинисемпе инвентаре юсас ĕçсем пыраççĕ. Анчах та чылай ялхуçалăх артелĕсем кăçалхи ĕçсене халĕ те туса çитермен-ха. Акă, 15 колхоз 1.500 гектар çинчен пухса кĕртнĕ тырпула çапса пĕтермен.

Авăн çапма колхозсене МТС пысăк пулăшу пама тивĕç. Анчах МТС дирекцийĕ колхозсемпе авăн çапма тунă договора вăхăтра пурнăçлассишĕн нимĕн чухлĕ те тăрăшмасть. МТС директорĕ П. Перловичпа главнăй агроном Щетинин юлташ районта пулакан кашни пухура, канашлура, пленумсемпе сессисенче хăйсем тунă «ÿсĕмсем» çинчен калаçаççĕ, колхозсене пулăшу пама сăмах пăраççĕ. Анчах вĕсен мухтанса каланă сăмахсем нихçан та ĕçпе çыхăнса пымаççĕ. Шверник ячĕпе тăракан колхозра договор тăрăх МТС-ăн 150 тонна тырă çапмалла пулсан, аран-аран 60 тонна ытларах çапкаланă. Мичурин ячĕпе тăракан колхоза илсе пынă МК-1100 молотилка çĕмĕрĕлсе темиçе эрне ĕçлемесĕр ларнă. Юсанă хыççăн та, Н. Петров машинист ĕçе тухман пирки, молотилкăпа йĕркеллĕн ĕçлени çук.

Н. ЦВЕТКОВ.



Чапаевски поселокри (Шупашкар хули) кĕнеке магазинĕнче. Кĕнеке туянакансен йышĕ ÿссех пырать. Магазин кĕнеке сутмалли плана кашни уйăхрах иртерсе тултарать.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: магазинта ĕçлекен Е. Канатчикова юлташ кĕнеке илекенсемпе калаçать.

Ф. ИВАНОВ фотоÿкерчĕкĕ.

Пирĕн ÿсĕм

Иртнĕ 1952 çул пысăк тухăçлăхпа ĕçленĕ çул пулчĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем тата МТС механизаторĕсем çĕнĕ çитĕнÿсем турĕç.

Пирĕн колхоз пурнăçĕнче 1952 çул çакăнпа палăрса тăрать: çĕрĕн пĕтĕм лаптăкне сортлă тырăсем акса турăмăр, вăрлăха яровизацилесе тата лайăхрах меслетсемпе акрăмăр, пур йышши тырăсене те минераллă тата вырăнти удобренисемпе тĕрĕс апатлантармалли системăна пурнăçласа пытăмăр, курăк акса тумалли тĕрĕс пусă çаврăнăшне йĕркелесе çитертĕмĕр, кĕрхи тата хура çĕртме тумалли çĕрĕс системине пурнăçласа пытăмăр.

Иртнĕ çул ялхуçалăхĕнчи ĕçсене малалла механизацилерĕмĕр. Ялхуçалăх техникипе туллинрех усă курнине пула çуракине 8 кун хушшинче иртернĕ, тырпул пухса кĕртес ĕçсене икĕ хут хăвăртрах тунă, государствăна тырă хатĕрлесе памалли плана августăн 25-мĕшĕнче тултарнă. Итем çинчи ĕçсене пурне те механизациленĕ тата электричество вăйĕпе туса пынă. Çакă пире паха тырпула сентябрĕн 12-мĕшĕ тĕлне çапса нĕтерме май пачĕ. 1952 çулхи пек ĕçсем хăвăрт пулса пынине колхозниксем иртнĕ çулсенче курман.

Малта пыракан агротехникăллă меслетсен пĕтĕм комплексне пурнăçа кĕртсе пынипе тата колхозниксемпе колхозницăсем уй-хирти ĕçсене пысăк хастарлăхпа туса пынипе колхоз ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне палăрмаллах ÿстерчĕ. Вăтам шутпа кашни гектартан 16-шар центнер ытла сортлă тĕштырă пухса кĕртнĕ. Ыраш гектартан 17,5 центнер, сурхи тулă—14,6 центнер, сĕлĕ—16 центнер, урпа—22 центнер, пăрса—19,5 центнер, вика вăрлăхĕ—25 центнер тухрĕç.

Уйрăм бригадăсен ĕçĕ тата савăнăçлăрах И Кириллов юлташ ертсе пыракан бригада вăрлăх участокĕнче кашни гектартан 30-шар центнер ыраш, 16-шар центнер сурхи тулă пухса кĕртрĕ. В Яковлев юлташ ертсе пыракан бригада 10 гектар çинче 20-шер центнер сĕлĕ, И. Ефимов юлташ ертсе пыракан бригада гектартан 22-шер центнер урпа, И Якимов юлташ ертсе пыракан бригада вăрлăх участокĕ çинче гектар пусне 30,9-шер центнер вика пухса илчĕç.

1952 çулта пухса кĕртнĕ тырпулăн пĕтĕм тухăçĕ 1951 çулхинчен 392 центнер нумайрах пулчĕ. Колхоз нумай çул ÿсекен куракăсен тухăçлăхне чылай ÿстерчĕ. Клевер вăрри гектартан 2,1-шер центнер тухрĕ. Государствăна 3.322 килограмм клевер вăрри хатĕрлесе парса колхоз 54 пин тенкĕ тупăш илчĕ.

Обществăллă выльăх-чĕрлĕх пахалăхне хăпартса пырас тĕлĕшпе те иртнĕ çул чылай ĕçсем туса иртертĕмĕр. Продуктивлă выльăхсен кашни ферми валли ăратлă производительсем çĕнĕрен туянтăмăр, выльăх-чĕрлĕхе тăрантарас, хĕллехи вăхăтра пăхса усрас ĕçе лайăхлатрăмăр, çавна май выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхĕ те чылай ÿсрĕ.

Обществăллă хуçалăха нумай енлĕ аталантарса пыни—колхозăн тупăшне ÿстермелли, ĕç ресурсĕсемпе тĕрĕс тата вырăнлăрах усă курмалли услови пулать. Ял ĕçченĕсем обществăн пурлăхĕпе пуянлăхне хушса пырассишĕн çине тăрса кĕрешеççĕ, колхоз производствин тĕрлĕ отраслĕсене пысăклатса пыма тăрăшаççĕ. Пирĕн парник хуçалăхĕ пысăк, унта эпир çулсеренех пахча çимĕç калчисем нумай ÿстеретпĕр. Пахча çимĕçе тухăçлă ÿстерсе колхоз тупăш чылай илет. Хула пасарĕсенче колхоз çуркунне пахча çимĕç калчи, çулла—помидор, хăяр, купăста, кишĕр, салат, çырла тата панулми чылай сутать. Хуçалăха нумай енлĕ аталантарса пынипе пирĕн колхозниксем çулла та, хĕлле те пĕр тикĕс ĕçлеççĕ.

Пирĕн колхоз çулсеренех обществăллă çурт-йĕрсем тăвать. Иртнĕ çулсенче пысăк клуб тунă, 1952 çулта сысна ферми валли çĕнĕрен типовой вите, тырă типĕтекен ПЗС-3 типовой сушилка туса лартнă. 1953 çулта сурăхсем валли стандартлă вите, хурт-хăмăр валли омшаник тата ытти çурт-йĕрсем лартма пăхатпăр.

Партин пуçламăш организацийĕ куллен ертсе пынипе, пирĕн артельти колхозниксем çĕнĕ çитĕнÿсем патне малалла хăюллăн пыраççĕ. Иртнĕ çулхи итогсем савнăç кÿчĕç. Ыранхи ĕçсем тата савăнăçлăрах пулаççĕ.

И. ДАНИЛОВ,
Шупашкар районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ.

Планран иртерсе 4 миллион тенкĕлĕх продукци

УЛАТĂР. Хулари предприятисен коллективĕсем 1952 çулхи производство планне декабрĕн 21-мĕшĕ тĕлне тултарма, продукци пахалăхне лайăхлатма, ĕç тухăçлăхне ÿстерме, перекетлĕхшĕн тимлĕн кĕрешме пулса социализмлă обязательство йышăннăччĕ. Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ йышăннă историллĕ решенисем тата съездра И. В. Сталин юлташ тухса каланă сăмах хулари ĕçсыннисен политикăллă активлăхĕпе ĕçри хастарлăхне тата ытларах вăйлатрĕç. Фабрикăсемпе заводсенче, чугун çул çинче çулталăкри плана срокчен тултарассишĕн, панă сăмаха чыслă пурнăçлассишĕн социализмлă ăмăрту анлă сарăлчĕ.

Рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен пуçарулăхĕпе пултарулăхĕ ÿссе пынине кăтартакан тĕслĕхсем нумай. Пĕлтĕр предприятисем 200 ытла рационализаторла сĕнÿ пурнăçа кĕртнĕ, ăна пула чĕртавар, топливо, электроэнерги т. ыт. те пурĕ 500 пин тенкĕлĕх ытла перекетленĕ. Хулари стахановецсен хисепĕ чылай ÿсрĕ. Сĕршер рабочи 1,5—2 çулхи ĕç нормине тултарчĕç, вуншар рабочи тата тухăçлăрах ĕçлерĕç. Социализмлă ăмăртăва коммунистсем пуçарса ертсе пыраççĕ. Вĕсем хĕрÿллĕ сăмахпа тата хастарлă ĕçпе партире гăман ĕçсыннисене хавхалантараççĕ. Предприятисенче партиллĕ-политикăллă тата партиллĕ-организациллĕ ĕç лайăхланчĕ, критикăпа самокритика вăйланать.

Хулари ĕçсыннисем çĕнĕ çула Тăван çĕршыв умĕнче йышăннă социализмлă обязательствăна чыслăн пурнăçланипе кĕтсе илчĕç. Хулари промышленность продукци туса кăлармалли çулталăкри плана срокчен тултарчĕ цланран иртерсе 4 миллион тенкĕлĕх продукци туса кăларчĕ. Тата тепĕр çитĕнÿ вăл—перекетленнĕ чĕртаварпа материалсенчен планран иртерсе пĕр миллион тенкĕлĕх продукци туса кăларни.

Чугун çул техникумĕн мастерскойĕ, йывăç япаласем тăвакан комбинат, кирпĕч завочĕ, торф предприятийĕ, арман комбиначĕ, Вырăнти топливо промышленность управленийĕн вăрманпромхозĕ, хĕрлĕ эрех завочĕ, «Красная звезда» артель çулталăкри плана Сталинла Конституци кунĕ тĕлне тултарчĕç. Махорка фабрики, сăкăр комбиначĕ, «Красная швея» тата «Союз инвалидов» артельсем пĕлтĕр пĕр тикĕс ĕçлерĕç, государство заданийĕсене тăтăшах ăнăçлă пурнăçласа пычĕç.

Чылай предприятисем çĕнĕ йышши япаласем туса кăларма тытăнчĕç. Хулари промкомбинат туса кăларакан хут купăссене республикăри ĕçсыннисем тулли кăмăлпа туянаççĕ. Автомашинăсем юсакан мастерской вăрман промышленноçĕнче усă куракан электромоторсене юсама, «Красный восход» промартель сăран туса кăларма тытăнчĕ. Ату-пушмак фабрики çĕнĕ йышши туфли туса кăларать.

1952 çулта хулара çĕнĕ цехсем, мастерскойсем чылай уçнă, пурăнмалли суртсем, шкулсем т. ыт. те лартнă. Чугун çул урлă кĕпер хывнă, автомашинăсем юсакан мастерскойра çĕнĕ корпус туса лартнă, торф предприятийĕнче ĕçе механизациленĕ, чугун çул çинче чылай ĕçсем тунă.

Цĕлтĕр çичĕ çул вĕренмелли шкул валли 380 ача вырнаçмалăх çĕнĕ çурт лартнă, магазинсемпе ларексем уçнă. «Красная швея» промартель ĕçсыннисен йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерекен комбинат туса пĕтерет. Хулара çĕнĕ, илемлĕ автобуссем, «Победа» машинăсем пур. Вĕсемпе нумай ĕçсыннисем усă кураççĕ.

Пăравуссем юсакан заводра, махорка фабрикинче, кирпĕч завоĕнче тата ытти предприятисенче рабочисемпе служащисем валли пурăнмалли çуртсем туса лартнă.

Çĕнĕ çулта хулари промышленноçпа транспорт умĕнче пысăк та ответлă задачăсем тăраççĕ. Тăван çĕршыва пăравуссем ытларах юсаса памалла, йывăç материалсем нумайрах тăратмалла, ĕçсыннисем валли ату-пушмак, махорка, тумтир, сĕтел-пукан т. ыт. те ытлăн-çитлĕн туса кăлармалла, продукци пахалăхне лайăхлатмалла, ĕç тухăçлăхне ÿстермелле. Рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем, парторганизаци ертсе пынипе, умра тăракан задачăсене чыслă пурнăçласа пырĕç, коммунизм строительствинче çĕнĕ çĕнтерÿсем тăвĕç.

И. ЕРЕМИН,
КПСС Улатăр хула комитечĕн промышленноçпа транспорт пайĕн заведующийĕ.

Тĕрĕслеме янă çырусем тăрăх

«Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцине Комсомольски районĕнче ĕçсыннисене хаçат-журнал çырăнтарасси кирлĕ пек пыманни, хăшпĕр пуçламăш парторганизацисемпе комсомол организацийĕсем çак ĕçе тивĕçлипе ертсе пыманни çинчен çыру килнĕччĕ.

КПСС Комсомольски райкомĕ пĕлтернĕ тăрăх, хаçат-журнал сарас ĕçе вăйлатасси, çак ĕçе коммунистсемпе комсомолецсене тата актива хутшăнтарасси çинчен парторганизацисен пухăвĕсенче сÿтсе явнă.

* * *

Первомайски районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра ялхуçалăх артелĕн Уставнĕ пăсса ĕçлени çинчен çырнă çырăва «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕ КПСС Первомайски райкомне тивĕçлĕ мерăсем йышăнма янăччĕ.

Парти райкомĕ Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра ялхуçалăх артелĕн Уставне пăсса ĕçлени çинчен райкомăн бюро ларăвĕнче сÿтсе явни çинчен пĕлтерчĕ. Бюро колхоз председательне Л. Дмитриев юлташа ялхуçалăх артелĕн Уставне пăсса ĕçленĕшĕн хытă ятланă. Устава пăснисене хăвăртрах пĕтерме çав колхоза райком хăйĕн представительне янă.

* * *

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Заветы Ленина» колхоз чылай ĕçсем енĕпе кая юлса пыни, колхозра ĕç дисциплини япăхни, тырпула вăхăтра пухса кĕртеймени, тырпул нумай тăккаласа пĕтерни, колхоз руководителĕсем ответлăха туймасăр ĕçлени çинчен çырнă заметкăна, çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнма, «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕ Хĕрлĕ Чутай районĕн ялхуçалăх пайне янăччĕ.

Районти ялхуçалăх пайĕ çырăва тĕрĕслеме ятарласа комисси тунă. Комисси «Заветы Ленина» колхоз председателĕ Г. Миронов, артель ĕçне ертсе пырас вырăнне, пĕрмаях ĕçсе çÿренипе колхозниксем хушшинче хăйĕн авторитетне çухатнине палăртнă. Колхоз правленийĕ тата унăн председателĕ Миронов агротехника кăтартăвĕсене пурнăçа кĕртсе пыман, колхозăн тырпул тухăçлăхĕ çителĕксĕр пулнă.

Колхозра ялхуçалăх артелĕн Уставне пăснă. Выльăх кĕтĕвне пăхма тата хăма сурма тара тытса укçа-тенкĕ тата тырпул нумай расходланă. 1952 çулта пурĕ те 3 пуху çеç иртернĕ, вĕсенче те пĕтĕм колхозниксенчен çурри те пулман. Колхоз членĕсен пухăвĕ татса памалли çивĕч ыйтусене Миронов председатель хăй пĕччен татса парса, Устава пăсса пурăннă.

«Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕ урлă янă çырури фактсене сÿтсе явма колхозра пуху иртернĕ. Ялхуçалăх артелĕн Уставне пăсса ĕçленĕшĕн тата тырпулпа укçа-тенкĕ салатса пĕтернĕшĕн, тырпулсене тирпейлĕ пухса кĕмелле туманшăн, выльăхсене хĕл каçарма çителĕксĕр хатĕрленнĕшĕн пуху колхоз председательне Миронова хытă асăрхаттарнă. Пуху колхоз правленине Р. Казынкинпа Р. Жижайкин бригадирсене хăйсен ĕçĕ çине ответсăр пăхнăшăн тата пĕрмаях ĕçнĕшĕн, бригадăсен ĕçне япăхтарса янăшăн, вырăнтан кăларма хушнă.

Сысна ферми заведующине И. Чучакова хăйĕн ĕçне япăх туса пынăшăн, выльăх апатне çаратнăшăн, сысна су[illegible] укçана хăй çумне чикнĕшĕн вырăнтан кăларса, суд урлă ответ тыттармалла тунă.

* * *

Чăваштарпромсоюз президиумĕ Шупашкар районĕнчи Паçпакри промысла артелĕн тата унăн председателĕн Ф. Е. Егоровăн çитменлĕхсем çинчен çырни тĕрĕс пулни çинчен пĕлтерчĕ. Артель руководителĕсем суя сведенисем тăратса е ытти майсемпе улталаса пурăннă. 1951 çулта мунчала хутса кăларнă чухне 5,32 тонна мунчала сахалтарах тухнă пек кăтартнă. Çак енĕпе айăплисене ответ тыттарма ĕçе Шупашкар районĕн прокурорне панă.

Суя сведенисем тăратнăшăн тата ытти енĕпе йĕркене пăсса ĕçленĕшĕн Паçпакри промысла артелĕн председательне Егоров юлташа хытă ятланă, кун пек çитменлĕхсем малашне те палăрсан ответ тыттарасси çинчен астутарнă.

САЛАМ, 1953 ÇУЛ!

Лев ОШАНИН,
Сталинла премй лауреачĕ

Салам, 1953 çул! Пиллĕкмĕш сталинла пилĕкçуллăхăн мухтавлă çулĕ, хамăр çĕршывра коммунизм тумалли çĕнĕ çул!

Салам, хĕвеллĕ те çутă 1953 çул, творчествăллă ĕçре савăнса ĕçлемелли çул, миршĕн, этемлĕх телейĕшĕн, коммунизмшăн кĕрешмелли çул!

Çакна эпир чĕрене уçса, хамăрăн çутă пуласлăха, ыранхи куна хытă ĕненсе калатпăр. Çав куна эпир Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн ялавĕ айне тăрса, ăслăран та ăслă çулпуçăмăр тата учителĕмĕр аслă Сталин тавра таччăн пĕтĕçсе утатпăр.

Эпир 1952 çула ăсататпăр. Вăл пире çĕнĕ те историллĕ çĕнтерÿсем курсе пачĕ. Вăл çул пысăк событисемпе паллă, çав событисем пирĕн Тăван çĕршывăмăра, пĕтĕм этемлĕхе малалла кайма кирлĕ çула çутатрĕç.

1952 çулта Сталин юлташăн «СССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă историллĕ ĕçĕ пичетленсе тухрĕ, вăл ĕç коммунизм тăвас ĕçре хăватлă хĕçпăшал пулса тăрать. Сталин юлташăн çак тĕрĕллĕ аслă ĕçне сĕр синчи çынсен нумай-нумай ăрăвĕсем вĕренĕç.

[1]952 çулта, пирĕн партин вунвиççĕ[...] хушшинчи ĕçĕпе кĕрешĕвне пăхса [...]а, XIX-мĕш съезд пухăнчĕ, историе [...] коммунизм тăвакансен съезчĕ пулса [...] юлĕ.

[...]нăн пĕлтерĕшĕ мĕн тери пысăк иккен[...]не сăмахпа каласа пама йывăр. Унăн [...]енийĕсен историллĕ пĕлтерĕшĕ мĕн [...]эн пысăкки çинчен пĕчĕк статьяра [...]ĕмĕшпе ниепле те каласа пама çук. [Г.] М. Маленков юлташ тунă доклад, партин Центральнăй Комитечĕн отчетлă [доклад]ĕ пирĕн чĕремĕрсене савăнтарчĕ, эпир хамăрăн паттăр партишĕн, вăл утса тухнă çулшăн савăнатпăр.

Съезд пиллĕкмĕш пилĕкçуллăх план тăрăх директивăсем йышăнчĕ, пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх планра палăртса хунă тăрăх, пирĕн экономикăпа культура нихçан пулман хăвăртлăхпа ÿссе çĕкленмелле.

Эпир хамăр çак çулсенче тунине, малашне, ыран мĕн тума пултарнине тепĕр хут куртăмăр.

Съездра эпир каллех аслă Сталин сăмахне илтрĕмĕр. Унăн тăванла партисене, коммунистсен тата рабочисен партийĕсене чĕнсе каланă сăмахĕсем пирĕн чĕремĕрсене кĕрçе вырнаçрĕç. Пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен çулпуçĕ, пирĕн юратнă Сталин вĕсене демократиллĕ ирĕклĕхсен ялавне, нацисен никама пăхăнманлăхĕн ялавне çĕклеме чĕнчĕ. Халăхсен миршĕн, демократишĕн тата социализмшăн пыракан, кĕрешĕвне ертсе пыма чĕнсе каларĕ.

Съезд ленинла-сталинла Центральнăй Комитет тавра таччăн пĕтĕçсе тăракан партин аслă пĕрлĕхне, совет халăхĕн аслă пĕрлĕхне кăтартса пачĕ.

1952 çулта коммунизмăн сталинла стройкисенчен пĕри—Атăлпа Дон хушшинчи канал ĕçе кĕчĕ. Легендарлă Сталинград, Атăл хĕрринчи çеçенхирте ларакан хула, пилĕк тинĕс порчĕ пулса тăчĕ. Шăрăхпа типсе выртакан çеçенхирсем шыв илчĕç Шăрăх çилсем пĕтсе пыраççĕ. Дон тăрăхĕнчи çеçенхирсем ытларах та ытларах ешĕлленеççĕ. Совет çыннисем сталинла план тăрăх сутçанталăка хăюллăн çĕнетсе улăштараççĕ.

Коммунизм стройкисенче аслă ĕçсен фрончĕ сарăлнăçем сарăлса пырать.

Хаклă тусăмсем! 1952 çулта мĕн-мĕн тунине пурне те шута илсе те пĕтерес çук. Мĕн чухлĕ çĕнĕ предприяти, халиччен курман машинăсем, дворецсем, больницăсем, театрсемпе клубсем тунă! Мĕн чухлĕ совет çынни çĕнĕ çуртсене кусрĕ! Вăтам шкулсемпе аслă шкулсенчен вĕренсе тухса диплом илнĕ çамрăксем мĕн чухлĕ! Совет çыннисем пурте вĕренеççĕ, мĕн чухлĕ çĕннине пĕлчĕç пулĕ вĕсем! Кашни савăнăçлăрах, пуянрах, культурлăрах пурăнма пуçларĕ. Çак иртнĕ çул хушшинче кашниех темиçе çулшăн ÿсрĕ.

Акă мĕншĕн эпир 1953 çула шанса та савăнса кĕтсе илетпĕр.

Эпир пĕлетпĕр, пирĕнпе пĕрле ирĕке тухнă Китай çыннисем те, халăх демократи çĕршывĕсенчи ĕçсыннисем те малашлăх çине шанса пăхаççĕ. Эпир пĕлетпĕр, Корейăри паттăр халăх çĕнĕ çула хăй çĕнтерессе шанса та ĕненсе кĕтсе илет. Эпир пĕлетпĕр, тĕнчери малта пыракан мĕнпур çынсем çĕнĕ çулта çĕнĕ вăрçă чĕртсе яма хăтланакансен мĕнпур ирсĕр ĕçĕсене хирĕç татах та таччăнрах пĕтĕçнипе, хĕрÿллĕрех кĕрешнипе ответлеме хатĕр.

Эпир пĕлетпĕр, инçетри чикĕсен леш енчи, капитализмлă тата колониллĕ çĕршывсенчи ĕçсыннисем пирĕн социализмлă Тăван çĕршывăмăр çине шанса пăхаççĕ. Çĕнĕ çул каçхине вĕсен чĕрисемпе шухăшĕсем пирĕнпе пĕрле. Пирĕн ĕç, пирĕн çĕнтерÿсем вĕсене кĕрешме вăй-хăват парса тăраççĕ, ыранхи куна ĕненме хăват параççĕ.

Миршĕн тăракансен Пĕтĕм Союзри IV-мĕш конференцийĕнче Мускав облаçĕнчи Наро-Фоминск районĕнчи Хрущев ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Мария Егоровна Белова хăйсен ялĕнчи çынсем çинчен калаçса пама ыйтнине калаçа пачĕ. Мускава ăсатса янă чухне мĕн каласа пама ыйтнине калаçа пачĕ.

— Тухса кала, Мария Егоровна,— терĕç вĕсем,— хамăрăн телейлĕ пурнăçăмăр çинчен, ĕçри çитĕнÿсем çинчен каласа пар. Кала, кашни совет çыннинех пĕтĕм чĕререн миршĕн тăрать, çĕр çинче пур çĕрте те мирлĕ пурнăç тăвасшăн вĕсем, вăрçă чĕртсе яма хăтланакан хурахсене пĕтĕм чунтан курăймастпăр, тесе калама хушса ячĕç.

Тата колхозниксем мана, терĕ Мария Егоровна, совет çыннисемшĕн тăрăшнăшăн хамăрăн тăван Коммунистсен партине тата хамăрăн чи лайăх тусăмăра, учителĕмĕре Сталин юлташа пĕтĕм халăх ячĕпе спасибо калама хушса ячĕç.

Аван каларĕ Мария Егоровна.

Америкăри çынçиенсем, Корея çĕрĕ çинче тискер кайăкла асса çÿрекенскерсем, тĕнчере çĕнĕ вăрçă пушарне чĕртсе ярассипе хăратаççĕ Иртĕхсе услам илесшĕн хыпса çуннă пирки Уолл-стрит банкирĕсем юнлă тискер вăрçа çĕнĕрен миллионшар çынна пăрахма хатĕр. Америка империалисчĕсем хĕçпăшалпа юнаççĕ, пирĕн Тăван çĕршывăмăр çине, халăх демократи çĕршывĕсем çине тапăнма хатĕрленеççĕ. Анчах пирĕншĕн вĕсем юнани хăрушă мар. Эпир лайăх пĕлсе тăратпăр, мир лагерĕ вăрçăпа империализм лагерĕнчен вăйлăрах. Пирĕн Тăван çĕршывăмăр хăватлă, никам çĕнтерейми вăйлă. Совет çыннисен сисĕмлĕхĕ нихçан та вăйсăрланмĕ. Чĕнмен «хăнасене» кĕтсе илме пĕлетпĕр эпир, хамăрăн Совет çĕршывĕн тăшманĕсене вĕлермеллех çапса аркатма та пĕлетпĕр. Ку çапла иккенне граждан вăрçи çулĕсенче Америкăпа Англи, Франци тата ытти интервентсем хăйсем тÿссе курчĕç. Тĕнчери иккĕмĕш вăрçă вăхăтĕнче эпир фашистла тискер кайăкăн çурăм. шăмминe çапса хуçрăмăр. Америка шакалĕсем çак уроксене ан манччăр. Эпир тара типĕ усратпăр.

Апла пулсан, тата хытăрах, тимлĕрех ĕçлер, наукăпа техникăна алла илес тĕлĕшпе тата ытларах çине тăрар, Ленин—Сталин партийĕн çĕнтерÿллĕ ялавне тата çÿлерех çĕклер.

Салам 1953 çул, коммунизм тумалли çул, аслă та туслă совет халăхĕн çĕнĕ çĕнтерÿсемпе çитĕнÿсем тумалли Çĕнĕ çулĕ!

ÇĔНĔ ÇУЛ

Мерчен пек юр хуллен çеç вĕçкелет,
Чÿречене лексе ачашшăн ирĕлет...
Паян пирĕнпеле Çĕн çул пулсан та,
Иртнĕ çула ман тав тăвас килет.

Вăл хăй ĕçне тĕреклĕ миршĕн пачĕ,—
Ăна мухтар-ха, тантăшăм, паян.
Ĕмĕрсенче çухалмĕ унăн ячĕ,—
Мухтавлисем вилмеççĕ нихçан.

Кăвак хумсемпеле пĕрле шавларĕ
Ун кашни кунĕ Атăл-Дон çинче,
Тăван çĕршывăн вĕççĕр хирĕнче
Колхоз хĕрĕсемпе пĕрле юрларĕ,
Хуласенче ÿстерчĕ керменсем...

Вăл Ленин сăрчĕсем çине хăпарчĕ,
Унта вăл турĕ университет.
Туркестана та саврĕ, алă пачĕ:
Халччен çын пурăнман вĕри хирте,
Чечекленет халь виноградăн сачĕ.

Корейăра та Çĕнĕ çул паян,
Корейăна та шурă юр пĕркенĕ,
Анчах çав юр халь юнпала хĕрелнĕ,
Çунса кĕлленнĕ-çке Пхеньян...

Çак самантра та, тен, унта аманчĕ,
Е вилчĕ пуль пĕр çамрăк, паттăр çын
Пĕлместĕп эп, мĕнле-ши унăн ячĕ,
Анчах пĕлеп—вăл ирĕклĕх ачи!

Çав паттăра сума сăвăр паян!
Корея çĕрĕ, вилĕмсĕр Пхеньян
Тăшмансене çĕнтертĕр, çĕнĕрен
çĕклентĕр,
Çурхи сад пек илемлĕн чечеклентĕр.

Тулта халь сивĕ хĕл. Тулта январь,
Шап-шур юра шăлса шух çил вĕрет,
Анчах пирте, пирте чун сивĕ мар,—
Çурхи кунсем юрлаççĕ чĕрере.

Эпир, Çĕнĕ çула саламласа,
Пур ырă халăха телей сунатпăр,
Пур ĕмĕт пултăр çăл куç пек таса,
Пур утăмсем—мĕн ĕмĕр паттăр!

Александр КЛЕМЕНТЬЕВ.

В. И. Ленин Сочиненийĕсен 28-мĕш томне венгерла пичетлесе кăларнă

БУДАПЕШТ, декабрĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). «Сикра» издательствинче И. В. Ленин сочиненийĕсен 28-мĕш томĕ пичетленсе тухнă. Тома кĕртнĕ нумай произведенисем венгерла пĕрремĕш хут пичетленсе тухнă. В. И. Ленин Сочиненийĕсен 28-мĕш томĕн тиражĕ — 50.000 экземпляр.

Китайри ĕçсыннисем 1953 çула ĕçре çĕнĕ çĕнтерӳсем тунипе кĕтсе илнĕ

ПЕКИН, январĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Китай Халăх Республикинчи мĕнпур районсенчи ĕçсыннисем 1952 çулта производствăра пысăк çĕнтерӳсем тунă. Производство планĕсене срокчен тултарни çинчен пур çĕртен те хыпарсем килеççĕ.

«Гуньженьжибао» хаçат ĕнер çапла пĕлтернĕ: ноябрь вĕçленнĕ тĕле государствăн металлурги завочĕсенчен чылайăшĕ чи кирлĕ продукци туса кăларас тĕлĕшпе государство планĕсене иртерсе тултарнă.

Сурçĕр-Хĕвелтухăç Китайри машинăсем тăвакан предприятисем ноябрь вĕçленнĕ тĕле çулталăкри производство планне тултарнă, продукци пахалăхне лайăхлатнă.

1951 çулхипе танлаштарсан, Китайри чугун çулсем тăрăх пассажирсем лартса çӳрессе 1952 çулта 15,7 процент ӳснĕ. Таварсем турттармалли çулталăкри плана срокчен 7 кун маларах тултарнă.

Сĕршыври пир-авăр тата суту-илӳ предприятийĕсенчен чылайăшĕ çулталăк заданине иртерсе тултарнă.

Сурçĕр Китайри производственниксем те сахал мар çитĕнӳсем тунă. Çав районти 90 заводпа шахта ноябрь вĕçленнĕ тĕле хăйсен производство планĕсене срокчен тултарнă. Пекинри тата ун таврашĕнчи нумай заводсемпе шахтăсенче, Хэбэй провинцийĕнчи заводсемпе шахтăсенче продукци туса кăлармалли тата чĕртавар перекетлемелли плана иртерсе тултарнă.

Хаçатсем çавăн пекех Юньнаньре тăхлан шăратмалли плана, Гуандун провинцийĕнчи предприятисем сахăр туса кăлармалли плана, Центральнăй-Кăнтăр Китайри заводсем цемент туса кăлармалли плана, Кăнтăр-Хĕвеланăç Китайри государство завочĕсем хими продукчĕсем туса кăлармалли плана иртерсе тултарни çинчен пĕлтереççĕ.

Демократиллĕ Германи Республикин президенчĕ Вильгельм Пик çĕнĕ çул ячĕпе каланă сăмах

БЕРЛИН, декабрĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Паян каçхине, çĕнĕ çул пуçланиччен, Демократиллĕ Германи Республикин президенчĕ нимĕç халăхĕ умĕнче радиопа сăмах тухса каланă. Иртнĕ çулхи итогсене палăртса, Вильгельм Пик çапла каланă:

Çĕнĕ вăрçă чĕртекенсем тата вĕсен агенчĕсем пире чăрмантарма тата сиенлеме хăтланнине, элекленине пăхмасăр, эпир 1952 çулта палăртнă тĕллеве иртерсе пурнăçларăмăр. Пирĕн республика промышленноçĕн пĕтĕм продукцийĕ, 1950 çулхипе танлаштарсан, 40,5 процент ӳснĕ. Уйрăммăнах промышленноçăн паллă отраслĕсенче продукци туса кăларас енĕпе пысăк çитĕнӳсем тунă.

Çанталăк условийĕсем начар пулнă пулин те, ялхуçалăхĕ планпа кăтартнă чухлĕ тырпул пухса кĕртнĕ, выльăх-чĕрлĕх йышне ӳстернĕ. Ирĕклĕ производствăллă ялхуçалăх кооперативĕсем нумай тунă хыççăн хресченсем хăйсен хуçалăхне палăрмалла лайăхлатма тытăнчĕç, çĕр ĕçĕнче тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре нумайрах тупăш паракан пысăк хуçалăхсем турĕç.

Промышленноçри паллă отраслĕсенче рабочисен ĕç укçине ӳстернĕ, интеллигенцин пурнăç условийĕсене тĕпренех лайăхлатнă. Ĕçсыннисем апат-çимĕç продукчĕсемпе промышленность таварĕсем, 1950 çулхипе танлаштарсан, 50 процент ытларах туяннă. Строительсем тунă çитĕнӳсене пула тата пирĕн республикăри халăх пулăшнипе пула, Берлина 1952 çулта юсамалли нациллĕ программăна пурнăçлама пултарнă. Сталин аллейинчи илемлĕ те пысăк суртсем эпир миршĕн тăнине тата эпир мир лагерĕн никам çĕнтереймен вăйне шанса тăнине ĕненмелле кăтартса параççĕ.

Иртсе кайнă çул нимĕç историйĕнче пирĕн халăхăн пурнăçĕнчи çĕнĕ тапхăрăн пуçламăшĕ пек пулса юлĕ. Демократиллĕ Германи Республикинче социализмăн никĕсĕсене план тăрăх туса пырасси çинчен йышăннă решение пула Германири социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕн иккĕмĕш конференцийĕ иртнĕ çулхи паллă политикăллă событисенчен пĕри пулса тăчĕ. Эпир Германире пирĕн халăхăн аслă ывăлĕсен Карл Маркспа Фридрих Энгельсăн идейисене пурнăçа кĕртме тытăнтăмăр.

Хĕвеланăç Германире, паллă тунă малалла Вильгельм Пик, 1952 çул халăх вăрçă политикине хирĕç тата Аденауэрпа унăн Америкăри хуçисем государство переворочĕсем тумалли политикине хирĕç тăрасси ӳссе пынă çул пулнă.

Вильгельм Пик çакна аса илтернĕ: Бонра тата Парижра алă пуснă вăрçă договорĕсем пирки халăх шухăш-кăмăлне ыйтса пĕлнĕ чухне Хĕвеланăç Германири 15 миллион çын çав договорсене хирĕç тăнине кăтартса панă, пĕрлĕхлĕ Германипе тĕреслĕхлĕ мирлĕ договор тума требовани лартнă.

Вильгельм Пик, СССР правительстви Германипе тумалли мирлĕ договорăн никĕсĕсем çинчен тăракан ыйту пирки панă сĕнӳсем çинчен асăнса, çакна кăтартса панă: Совет правительствин çак сĕнĕвĕсене, çавăн пекех Демократиллĕ Германи Республикин правительствипе Халăх палати мирлĕ ĕçсем тунине нимĕç халăхĕ хĕрӳллĕн ырлать.

Анчах, тенĕ малалла Вильгельм Пик, Америкăри вăрçă чĕртекенсем тата вĕсен Бонри тарçисем халăхсем миршĕн тăнине, пирĕн халăх наци пĕрлĕхĕшĕн тăнине нимĕн вырăнне те хумаççĕ.

Юлашкинчен Вильгельм Пик нимĕç халăхне Бонра тата Парижра алă пуснă вăрçă договорĕсене çирĕплетессине хирĕç мирпе майпа тăван çĕршыва пĕрлештересси çинчен килĕшӳ тăвассишĕн, Германипе тĕреслĕхлĕ мир тăвассишĕн кĕрешме чĕнсе каланă.

Америкăн Польшăна хирĕç ĕçленĕ разведкине тăрă шыв çине кăларнă

ВАРШАВА, январĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Польшăри пичет агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Польшăн чикĕри влаçĕсем патне Польша гражданĕсем Ванда Вебер тата Ян Хома пынă. Вĕсем хăйсене тăван çĕршыва таврăнма ирĕк пама ыйтнă. Çак çынсем Америка разведки тытса усракан эмигрантсен Мюнхенри разведка тăвакан центрĕн членĕсем пулнă. Вăл центр «Отдел крайовой политического совета» ятлă пулнă. Çак шпионла центра «Стронництва народове» текенскерĕн представителĕ Владислав Фурка, «Петер» ятпа ĕçлекенскер, ертсе пырать.

Польшăна хирĕç ирсĕр ĕç тунă çĕре текех хутшăнас мар тесе, Вебер тата Хома Хĕвеланăç Германирен тарнă. Вĕсем Польша Халăх Республикин обществăллă хăрушсăрлăх органĕсене Америка разведкин меслечĕсене, çавăн пекех Америка разведки кăтартнипе ĕçлекен шпионла центрăн меслечĕсене тăрă шыв çине кăларакан нумай материалсем панă.

Нью-Йоркри автобус паркĕнче ĕçлекенсен забастовки

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Нью-Йоркра забастовка пуçланнă, ăна транспортри рабочисен пĕрлешӳллĕ профсоюзĕ (производствăллă профсоюзсен конгресне кĕрет) пуçланă. Забастовкăна автобус водителĕсем тата юсав ĕçĕнче ĕçлекен рабочисем 8 пин çын хутшăнаççĕ. Вĕсем ĕçлемелли вăхăта чакарма, рабочисен ĕç укçине унченхи пекех хăварма требовани лартнă.

Транспорт рабочийĕсен пĕрлешӳллĕ профсоюзĕн председателĕ Куилл çапла каланă: автобус паркĕнче ĕçлекен рабочисем забастовка тунă вăхăтра Нью-Йоркри влаçсем муниципальнăй влаçсем аллинче тăракан метро линийĕсен ĕçне вăйлатма требовани лартсан метрори 45 пин рабочи пĕтĕмĕшле забастовка тума тытăнĕç. Куилл метрори рабочисене ĕç хыççăн юлса ĕçлеме чарнă.

АЛЖИРТИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙĔН СЕКРЕТАРЬНЕ АРЕСТЛЕНĔ

ПАРИЖ, январĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). «Юманите» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, «Ирĕклĕхсене хисепленине хӳтĕлекен Алжир фрончĕ» листовка салатнăшăн Алжирти Коммунистсен партийĕн секретарьне Поль Кабальерона арестленĕ. Листовкăра Алжир тата Марокко халăхĕсем пĕр шухăш-кăмăллă пулни çинчен çирĕплетсе каланă пулнă.

США-ра профсоюзсене хĕсĕрлеççĕ

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем пĕлтерниччен çакă курăнать: США Конгресĕн тĕрлĕ комиссийĕсемпе комитечĕсенче профсоюзсене каллех айăплама хатĕрленеççĕ. Хăшпĕр профсоюзсем, профсоюзсен сутăнчăкла руководителĕсен ирĕк-шухăшне пăхмасăр, рабочисен класс интересĕсемшĕн кĕрешеççĕ. Ун пек профсоюзсене уйрăммăнах хĕсĕрлеççĕ.

1952 çулхи октябрь уйăхĕнче металпа руда промышленноçĕн тата металл шăратакансен çĕр пине яхăн члена пĕрлештерсе тăракан профсоюзĕнче «ыйтса тĕпчени» хыççăн, сенатăн шалти хăрушсăрлăх ыйтăвĕсем енĕпе ĕçлекен подкомисси председателĕ Маккаран çак профсоюза айăплас тесе айванла «айăпсем» кăларса тăратнă. Вăл «айăпсене», паллă ĕнтĕ, тĕпчесе пĕлекен бюро агенчĕсем панă сведенисем тăрăх шухăшласа кăларнă. Вăл агентсем, уйрăммăн илсен, çапла каланă: ку профсоюзăн руководителĕсем «коммунистсем е вĕсем майлă тăракан çынсем» пулса тăраççĕ, вĕсем рабочисене забастовкăсем тума ирĕксĕрленĕ имĕш.

Çакăн пек «айăпсем» тупса, подкомисси Тафт-Хартли законĕн профсоюзсемпе вĕсене ертсе пыракансене хирĕç пыракан статьисене татах та вăйлатасси çинчен хăйĕн сĕнĕвĕсене тепĕр хут тăратнă. Ку сĕнӳсем «коммунистла» профсоюзсем хушшинче каласусем иртересине тата килĕшӳсем тăвассине чарма, коммунистсене профсоюзсенчи официальнăй вырăнсене йышăнма чарма палăртаççĕ. США юстици министрĕ 200 организаци «сăтăрла ĕçсем тăвакан организацисен» списокне кĕртнĕ. Подкомисси сĕнĕвĕ тăрăх, предприяти хуçисем предприятире ĕçлекен кирек мĕнле çынна та, вĕсем асăннă 200 организаципе пĕринче тăраççĕ тесе шутласан, ĕçрен кăларса яма пултараççĕ.

США-ри халăх шучĕ

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед Пресс агентстви Вашингтонран пĕлтернĕ тăрăх, перепись бюровĕн директорĕ Пил çапла каланă: хальхи вăхăтра США-ра 158.434 пин çын пурăнать.

ВАТИКАН НУМАЙ ÇĔР ТЫТСА ТĂРАТЬ

РИМ, декабрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). «Темпо» хаçат çакна кăтартса парать: Ватикан хăйĕн аллинче 465 пин гектар çĕр тытса тăрать. Ку çĕрсен 40 проценчĕ — иртнĕ ĕмĕрчен папа государствине кĕнĕ территорире, 60 проценчĕ — ытти районсенче. Хаçат çакна паллă тăвать: Ватикан аллинче тăракан çĕрсем çинче ĕлĕкхи меслетсемпе ĕçлеççĕ.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, декабрĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ декабрĕн 31-мĕшĕнче çапла пĕлтернĕ:

Иртнĕ кун хушшинче Корея Халăх çарĕн тата Китай халăх добровольцĕсен соединенийĕсем мĕнпур фронтсенче Америкăпа Англи интервенчĕсен тата Ли Сын Ман çарĕсене хирĕç артиллерирен персе тăнă. Фронтсенче паллă улшăнусем пулман.

Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем паян тăшманăн 4 самолетне персе ӳкернĕ, 3 самолетне сиенленĕ.

ПХЕНЬЯН, январĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ январĕн 1-мĕшĕнче çапла пĕлтернĕ:

Иртнĕ кун хушшинче Корея Халăх çарĕн тата Китай халăх добровольцĕсен соединенийĕсем Америкăпа Англи интервенчĕсен тата Ли Сын Ман çарĕсене хирĕç унченхи вырăнсенчех артиллерирен персе тăнă.

Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем тата самолетсене хирĕç кĕрешекен салтакĕсем паян тăшманăн 3 самолетне персе ӳкернĕ, 6 самолетне сиенленĕ.

Ким Ир Сен Корея Халăх çарне тата Китай халăх добровольцĕсене çĕнĕ çул ячĕпе саламласа янă çыру

ПХЕНЬЯН, январĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Пхеньянри радио Корея Халăх çарĕн Верховнăй Главнокомандующийĕ Ким Ир Сен генерал Корея Халăх çарĕн салтакĕсемпе офицерĕсене çĕнĕ çул ячĕпе саламласа çырнă çырăва вуласа панă.

Халăх çарĕн хаклă салтакĕсем, сержанчĕсем, офицерĕсемпе генералĕсем, тенĕ çырура, çĕнĕ, 1953 çула—кĕрешӳсемпе çĕнтерӳсен çĕнĕ çулне кĕтсе илнĕ май, Демократиллĕ Корея Халăх Республикин правительстви, Ĕçлĕх партийĕ ячĕпе тата хам ятпа сире, Тăван çĕршывăн никама пăхăнманлăхĕпе ирĕклĕхĕшĕн паттăррăн кĕрешекенсене, çĕнĕ çул ячĕпе чĕререн саламлатăп. Иртнĕ çулта Корея Халăх çарĕ, Китай халăх добровольцĕсемпе тачă çыхăнса, фронтăн мĕнпур участокĕсенче тăшманăн атакисене ăнăçлăн сире-сире пычĕ, тăшманăн техникипе салтакĕсене нумай пĕтерчĕ, чаплă çĕнтерӳсем турĕ. Анчах та паттăр Корея Халăх çарĕ, çавăн пекех Китай халăх добровольцĕсем хăватлăн çине-çине пырса çапнине пула Корея фронтĕнче намăслăн поражени тӳснине пăхмасăр, Америка интервенчĕсем агрессиллĕ тĕллев тытма пăрахмаççĕ. Вĕсем перемири çинчен пыракан каласусене пăсса авантюрăллă вăрçа сарса яма хăтланаççĕ. Тăшманăн çакăн пек усал ĕçĕсене асра тытса, Халăх çарĕн салтакĕсемпе офицерĕсен хăйсен çапăçури пултарулăхне тата сыхăлăхне вĕçĕмсĕр ӳстерсе пымалла, чаçсенче çапăçури пултарулăха тата çар дисциплинине малалла тĕреклетсе пымалла.

Корея Халăх çарĕн салтакĕсемпе офицерĕсен, фронтра хăйсем йышăннă позицисене татăклăн хӳтĕлесе, вăрçă ĕçĕсене вăйлатса тата çапăçу ăсталăхне ӳстерсе пырса, тăшмана хуть те хăш вăхăтра та, хуть те хăш вырăнта та, вăл кирек мĕнле вырăнта тапăнать пулсан та, хăватлăн пыра-пыра çапмалла.

Эпĕ çакна шанса тăратăп: çĕнĕ çитĕнӳсемпе çĕнтерӳсем тăвас тесе, çĕнĕ, 1953 çулта Халăх çарĕн салтакĕсемпе тата офицерĕсемпе Китай халăх добровольцĕсем хушшинчи туслăха тата ытларах çирĕплетĕç, пĕр шухăш-кăмăллă пулĕç, патриотизмпа паттăрлăхăн ырă тĕслĕхĕсене нумайлатĕç, тăшманăн вăрçă авантюрисене çĕмĕрсе тăкĕç.

Ким Ир Сен çавăн пекех çĕнĕ çул ячĕпе Демократиллĕ Корея Халăх Республикин правительстви, Корейăри Ĕçлĕх партийĕ тата хăйĕн ячĕпе Китай халăх добровольцĕсем патне те çыру янă. Саламлă çырура Ким Ир Сен çакна çирĕппĕн шанса тăнине палăртнă: Китай халăх добровольцĕсем, çавăн пекех Корея Халăх çарĕ, пĕр-пĕринпе тачă çыхăнса çапăçассине тата пĕр шухăш-кăмăллă пулнине ӳстерсе пырса, тăшмана—Америка агрессорĕсене татăклăн пырса çапма хатĕр тăнине тата ытларах вăйлатĕç.

МИРШĔН КĔРЕШЕКЕНСЕНЕ ХĔСĔРЛЕНИНЕ ХИРĔÇ АЗИРИ ТАТА ЛĂПКĂ ОКЕАН ТĂРĂХĔНЧИ ÇĔРШЫВСЕНЧИ МИРШĔН ТĂРАКАНСЕН СЫХĂНУ КОМИТЕЧĔ ПРОТЕСТЛЕНИ

ПЕКИН, декабрĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентстви çапла пĕлтерет:

Азири тата Лăпкă океан тăрăхĕнчи çĕршывсенчи миршĕн тăракансен çыхăну комитечĕн представителĕ Америка, Японии тата Таиланд правительствисем миршĕн кĕрешекенсене хĕсĕрленине хирĕçлесе çырнă протеста пичетлесе кăларнă. Протестра çапла каланă:

Азири тата Лăпкă океан тăрăхĕнчи çĕршывсенчи миршĕн тăракансен Конгресĕ хупăннă хыççăн, США государство департаменчĕ Пĕрлешӳллĕ Штатсене пырса кĕмелли мĕнпур пунктсен влаçĕсене, çавăн пекех урăх çĕршывсенчи хăйĕн посольствисене ноябрĕн 16-мĕшĕнче приказ ярса панă. Вăл приказра Азири тата Лăпкă океан тăрăхĕнчи çĕршывсенчи миршĕн тăракансен Конгресне хутшăннă Америка делегачĕсене арестлемелли çинчен, çавăн пекех вĕсен паспорчĕсене пăрахăçа кăлармалли çинчен каланă. Иосида правительстви те, Америкăн оккупаци влаçĕсем хушнипе, Азири тата Лăпкă океан тăрăхĕнчи çĕршывсенчи миршĕн тăракансен Конгресне хутшăннă Япони делегачĕсене арестлесси çинчен çавăн пек приказ панă. Ноябрĕн 18-мĕшĕнче Токиона таврăннă Япони делегатне—Хироси Минами доктора полици ухтарнă тата ыйтса тĕпченĕ. Таиландри миршĕн тăракансене Таиланд правительстви хытă хĕсĕрлет. Октябрĕн 10-мĕшĕнчен пуçласа Таиландра мире хӳтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен Таиланд комитечĕн председательне тата комитет членĕсене, çавăн пекех миршĕн тăракансене çĕр çынна ытла арестленĕ. Арестленисем хушшинче Чароен Супсен доктор, Куларп Сайпрадит, Нилмниял Чолнум, Марут Буннег тата Арн Ливара пур. Таиландра миршĕн тăракан юхăма хирĕç кĕрешесси çинчен закон йышăннă. Çакăн пек тискер мерăсем ытти чылай çĕршывсенче те йышăннă.

Азири тата Лăпкă океан тăрăхĕнчи çĕршывсенчи миршĕн тăракансен çыхăну комитечĕ Пĕрлешӳллĕ Штатсен, Японипе Таиланд правительствисем миршĕн тăракансене хĕсĕрленине хирĕç, гражданла правасене пăсса миршĕн пыракан юхăма чаракан ирсĕр ĕçсене хирĕç татăклăн протестлет.

Италире шыв тулни

РИМ, январĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Тибр юханшывĕ тулса сарăлса кайнă пирки Перуджа провинцийĕнче виçĕ пин гектара яхăн çĕре шыв илнĕ. Акцила тата Авенцано провинцийĕсенче Атерно юханшывĕ тулнипе пиншер гектар çĕре шыв илнĕ. Луко де"Марси районĕнче (Акцила провинцийĕ) шыв илнипе 500 миллион лира чухлĕ сиен пулнă.

Францири правительство кризисĕ

ЛОНДОН, декабрĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Парижран çапла пĕлтерет:

Декабрĕн 30-мĕшĕнче каçхине Бидо Францин çĕнĕ правительствине тума килĕшменни çинчен пĕлтернĕ.

ПАРИЖ, декабрĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Рене Мейер (радикалсен тата радикал-социалистсен партийĕн лидерĕсенчен пĕри) çĕнĕ правительство тума сĕннине йышăннă. Вăл, яланхи пекех, тĕрлĕ партисен представителĕсемпе канашлама тытăнать, ун хыççăн республика президентне татăклă ответ парать.

Паянхи Тĕрлемес

Тĕрлемес ятпа икĕ ял тата чугун çул станцийĕ сыхăннă. Ялĕсем—кивви те, çĕнни те—хăйсен кун-çулĕсемпе станцăран ватăрах. Тĕрлемес станцийĕн никĕсне Мускавпа Хусан хушшинчи чугун çулпа пĕрле, иртнĕ ĕмĕр вĕçĕнче, хывнă. Ун чухне станцăра пĕчĕк вокзалпа мастерсем пурăнмалли çурт кăна пулнă. Каярахпа кунта усламçăсем чайнăйпа трактир тытма пуçланă.

Совет влаçĕ Тĕрлемес ятне кăна мар, пĕлтерĕшне те çӳле çĕклерĕ. Станци ячĕ граждан вăрçи историне кĕрсе юлчĕ. Станци сывăхĕнче, вăрманта, тăвансен масарĕ пур. Унта халăх телейĕшĕн çапăçса пуçĕсене хунă 18 красногвардеец выртать. Масар çинчи тимĕр карталлă памятник патне çулла та, хĕлле те çул такăр. Тĕрлемес çыннисем революциллĕ уявсене паллă тума çакăнта пухăнаççĕ.

...Станцине «Мускав—Новосибирск» поезд çитсе чарăнать.

— Мĕн тери илемлĕ дача!—теççĕ каникула каякан студентсем, станци сывăхĕнчи вăрманта ӳсекен юмансем çине ытараймасăр пăхса.

— Станци хăй мĕнрен начар вара?—тет ватă стрелочник. Унтан вăл çĕнĕ çуртсем çине кăтартать.

Куç умне сталинла пилĕкçуллăхсенче лартнă вокзалпа служба çурчĕсем, пекарньăпа столовăй, магазинсемпе ларексем тухса тăраççĕ. Юнашарах почта уйрăмĕ, пуçламăш шкул, лесничество çурчĕ. Сулăн леш енче—хатĕрлев организацийĕсен кантурĕсемпе склачĕсем, йывăç лартса çитĕнтерекен «Живая защита» çурчĕсем. Чугун çул работникĕсен вуншар çурчĕсем станцăна поселок пек сăн-сăпат кĕртеççĕ.

Станци вăйлă пăрăхпа Атăлтан шыв илсе тăрать. Шыв тытма виçĕ башня тунă.

Татти-сыпписĕр иртеççĕ станци урлă чугун çул составĕсем. Пĕрисем—колхозсем валли минераллă удобренисемпе ялхуçалăх машинисем тиесе килеççĕ. Теприсем—Куславккари завод тунă пурăнмалли çуртсене кирлĕ çĕре илсе каяççĕ. Çак ĕçре Тĕрлемес железнодорожникĕсем хăйсен саврăнăçулăхне кăтартаççĕ. Вĕсенчен чи лайăххисене правительство орденсемпе тата медальсемпе наградăланă. Аслă стрелочник П. Охримов кăкăрĕ çинче Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ ялкăшать.

Тĕрлемес ялĕсем вĕренӳ заведенийĕсемпе, культура вучахĕсемпе палăрса тăраççĕ. Кунта колхоз бухгалтерĕсем хатĕрлекен шкул, вăтам шкул, вулав çурчĕ, библиотека ĕçлет. Çитес çулта вăтам шкул валли икĕ хутлă çĕнĕ çурт пулать. Строительство ĕçĕсем пуçланнă. Ялсенче фельдшер пункчĕпе трахпункт пур.

Тĕрлемес çамрăкĕсем пĕлӳ патне, йывăç-курăк хĕвел çуттине туртăннă пекех, туртăнаççĕ. Сталинла Конституци панă вĕренӳ правипе усă курса, 72 çын аслă шкултан, 160 çын вăтам шкултан вĕренсе тухнă. Вĕсем хушшинче учительсем—43, врачсем—16, инженерсем—18, ялхуçалăх специалисчĕсем—21. Нумайăшĕ чугун çул çинче ĕçлеççĕ: 10 çын станци начальникĕнче, 49 çын сыхăну службинче.

Тĕрлемессем хăйсен паллă çыннисемпе мухтанаççĕ. Кивĕ Тĕрлемес çынни В. Харитонов Совет Союзĕн Геройĕ ятне, Çĕнĕ Тĕрлемес хĕрарăмĕ У. Степанова Ача амăшĕ Геройня ятне илнĕ. Кунта çуралса ӳснĕ Мария Михайловна Коренькова—Чăваш АССР шкулĕсен тава тивĕçлĕ учительници. Унăн упăшки Гаврил Алексеевич Кореньков РСФСР шкулĕсен тава тивĕçлĕ учителĕ пулнă.

Ял ĕçченĕсем «Коммунар» колхоза пĕрлешнĕ. Ку колхоз—районта малта пыраканнисенчен пĕри. Опытлă председатель А. Степанов ертсе пынипе артель организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен çултан çул тĕрекленсе пырать. Унăн хуçалăхĕнче пахча çимĕç туса илесси паллă вырăн йышăнса тăрать. Кăçал колхоз пахча çимĕçрен 65 пин тенкĕ тупăш илнĕ. Артель фермисем çĕнĕ витесемпе, пурăнмалли çуртсемпе илемленчĕç. Кайăк-кĕшĕк усрамалли витене шлакпа бетонран тăваççĕ.

Кăç пулсассăн Ильич лампочкисем Тĕрлемес урамĕсене хулари пек çутатаççĕ. Вара çамрăксемпе пĕрлех ваттисем те культура çурчĕсене çул тытаççĕ. Нумаях та пулмасть Мускавран, Шупашкартан тата Куславккаран килнĕ лекторсем партин XIX-мĕш съезчĕн ĕçĕсем çинчен тата ытти ыйтусемпе лекцисем вуласа пачĕç. Парторганизаци уйăрнă агитаторсем вырăнти Советсен пулас суйлавĕ çинчен ăнлантарса пама тытăнчĕç. Эрнере пĕр хутран кая мар кинокартинăсем кăтартаççĕ.

Çакăн пек паянхи Тĕрлемес. Ыранхи Тĕрлемес, Тăван çĕршывăн кашни кĕтесĕ пекех, тата илемлĕрех, тата кĕрнеклĕрех пулĕ.

Т. ИВАНОВ. (Хамăр корр.).

Бельгири ĕçсĕрлĕх

БРЮССЕЛЬ, январĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатра пичетленнĕ официальнăй сведенисем тăрăх, Бельгире ĕç тупайманнисен йышĕ 1952 çул вĕçленнĕ тĕле 311.449 çынна çитнĕ. Юлашки эрне хушшинче ĕçсĕр тăрса юлнисен хисепĕ 21 пин çын чухлĕ ӳснĕ. Пачах ĕçсĕр пурăнакан рабочисен хисепĕ 202 пин çынна çитет.

«Драпо руж» хаçат çапла çырать: çак официальнăй сведенисем ĕç тупайманнисен хисепне тĕрĕс кăтартса памаççĕ, мĕншĕн тесен ĕçсĕр тăрса юлнă пиншер çынна пособисем паман, официальнăй статистика вара вĕсене шута илмен.

Пăрачкав районĕнчен килнĕ хыпарсем

* **Йĕтĕнрен пысăк тупăш.** М. Горький ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕ кăçал пысăк тухăçлă йĕтĕн çитĕнтерчĕ. 19 гектар çĕр лаптăкĕ çинче кашни гектартан саккăршар центнер йĕтĕн вăрри çапса илнĕ. Колхоз йĕтĕнрен 100 пин тенкĕ тупăш илчĕ.
* **Малта пыракан ял Совечĕ.** Висяга ял Советĕнчи Ильич ячĕпе тăракан колхозра кăçал ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлă вĕçленĕ, халĕ çуракине тимлĕн хатĕрленеççĕ. Ял Совечĕ IV-мĕш кварталта укçа-тенкĕ пухмалли плана декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне тултарнă.
* **Выляв укçи илеççĕ.** Пăрачкаври перекет касси 1952 çулхи 11 уйăх хушшинче 393 пин тенкĕ выляв укçи тӳленĕ. Вăл шутра виçĕ çын 10-шар пин, вунпĕр çын 5-шер пин тенкĕ выляса илнĕ.
* **Пултаруллă киномеханик.** А. Нагаев юлташ çичĕ çул хушши киномеханик пулса ĕçлет. Вăл «Трактор», «Победа», «Факел», «Трудовик» тата ытти колхоз членĕсене кинокартинăсем тăтăшах кăтартать. Нагаев юлташ 1952 çулхи финанс планне ноябрĕн 7-мĕшĕ тĕлне тултарнă, вăл кăтартнă фильмсене 15 пин çын ытла пăхнă.
* **Йĕлтĕрçĕсен кросĕ.** Çак кунсенче Пăрачкавра йĕлтĕрçĕсен кросĕ пулса иртрĕ. Унта 270 çын хутшăнчĕ. Вунă километра ăмăртса чупса Сиявăри вăтам шкул команди мала тухрĕ. Уйрăм йĕлтĕрçĕсенчен çак дистанцие Прохоровпа Баландин 45 минутра чупса тухрĕç. Хĕрачасенчен пилĕк километра ăмăртса чупса Хрусталевăпа Лоткова (Сиява) тата Исаакова (педучилище) лайăх тĕслĕх кăтартрĕç.

Кĕскен

★ **Учительсен кунĕ.** Калинино районĕнче учительсен кунĕ пулса иртрĕ Унта К. Евлампьев юлташ «Социализмран коммунизма куçмалли çулсем» тата А. Корнилов юлташ «Шкулти политехникăллă вĕренӳ» темăсем тăрăх докладсем турĕç.

А. ОСОКИН.

★ **Хастарлă киноработник.** Шăхасан районĕнчи Матшу ялĕнче стационарлă киноустановка тунă. Кино кăтартас тĕлĕшпе ĕçлеме Н. Сергеев юлташа уйăрнă. Вăл çак ĕçе юратса тăвать. Кинокартина кăтартасси çинчен халăха малтанах пĕлтерет. Кинофильмсен содержанийĕпе паллаштарать. Халĕ ялта кино кăтартас ĕç нумай лайăхланчĕ.

И. АНДРЕЕВ.

★ **Кружоксем йĕркеллĕ ĕçлеççĕ.** Калинино районĕнчи Уйкас Юнтапари вăтам шкулта кружоксем лайăх ĕçлеççĕ. «Аста аллăсем» кружок членĕсем физика урокĕнче кирлĕ наглядлăй пособисем чылай туса хатĕрленĕ. Литература кружокĕн членĕсем алăпа çырса «Çамрăк хунав» ятлă журнал кăлараççĕ. Çамрăк математиксен, химиксен, натуралистсен кружокĕсем те йĕркеллĕ ĕçлеççĕ.

М МАТВЕЕВ.

★ **Шахмат турнирĕ.** Чкаловски районĕнчи Киров ячĕпе тăракан вăтам шкулта шахмат вăййине районта мала тухассишĕн турнир пулса иртрĕ. Унта 11 çын хутшăнчĕ. Тăватă кун пынă ăмăртура, 8 очко илсе, И. Я Яковлев ячĕпе тăракан педагогика училищинчи шахмат чемпионĕ—IV-мĕш курсра вĕренекен Мансур Абдуллин мала тухрĕ.

И. МАТРОСОВ.

Рысь тытнă

ПЕРВОМАЙСКИ. «Путь социализма» колхоз членĕ Ключников сунарта сӳренĕ чухне хăй умне кĕтмен çĕртен рысь сиксе тухнине курнă. Сунарçăн йыттисем рыса хупăрласа илнĕ. Рысь сывăхри йывăç çине хăпарнă. Ключников рыса персе вĕлернĕ. Анчах рысь йывăç çинчен тăрса ӳкмен. Унăн сивчĕ чĕрнисем йывăç çине кĕрсе ларнă. Йывăça касса янă хыççăн çеç рыса ун çумĕнчен хăйпатса илнĕ.

Юлашки 2—3 çул хушшинче Первомайски район территорийĕнчи вăрмансенче тăватă рысь тытнă.

А. ТУКМАКОВ.

Хоккей

Спартаковецсен çĕнтерĕвĕ

Январĕн 1-мĕшĕнче Шупашкарти «Молния» спорт обществи катокĕнче стадион хуçисем «Спартак» спорт обществи хоккеисчĕсемпе тĕл пулса вылярĕç. Спартаковецсем «Молния» спорт обществи командине 8:2 шутпа çĕнтерчĕç.

Çапла ĕнтĕ, хоккей вăййипе иртнĕ çул республика чемпионĕн ятне илнĕ «Молния» спорт обществин хоккей команди хулара мала тухассишĕн иртерекен ăмăртура иккĕмĕш хут выляса ячĕ. (Малтанхи вăйăсенче «Динамо» командине выляса янăччĕ).

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ
Паян, январĕн 3-мĕшĕнче, кăнтăрла та, каçхине те вырăсла спектакль
«ДЕВИЦЫ-КРАСАВИЦЫ»
Кăнтăрлахи спектакльсем 12 сехетре, каçхи спектакльсем 20 сехетре пуçланаççĕ.

«РОДИНА» КИНОТЕАТРТА
12 сехетре тата 14 сехетре пуçланакан сеансенче паян, январĕн 3-мĕшĕнче
«ДЕТСТВО ГОРЬКОГО».
ыран, январĕн 4-мĕшĕнче
«ПОЕДИНОК».

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь— 4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—3-99, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01208 Типография №1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000